ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Ноябрь
13
ЭРНЕКУН
№ 221 (9130)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ. П. Павлов, М. Ландыш.—Паянхи Чурачăк (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Н. Савельев—Хĕрлĕ Чутай районĕнчи парторганизацин конференцийĕ; М. Васильев.—Пропагандист ĕçĕнчи хăшпĕр чăрмавсем; И. Петров. — Коммунистсем производствăра малта пыраççĕ (2 стр.).
МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕН ОПЫЧĔ. Обществăлла хуçалăх ӳсет, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланать (2 стр.).
А. Семенов.—Актив—вырăнти Советсен терекĕ (3 стр.).
В. Егоров.—Ялхуçалăх ĕçĕсене лайăхрах механизацилессишĕн (3 стр.).
Редакцие килнĕ çырусем (3 стр.).
И. Григорьев.—Магазинра (3 стр.).
Г. Байдеряков.—Мир вăрçа çĕнтерет (3 стр.).
Китайри предприятисенче Совет Союзĕнчи малта пыракан ĕç меслечĕсемпе усă кураççĕ (4 стр.).
Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ чĕнсе калани (4 стр.).
Мосаддыка суд туни (4 стр.).

Вăрман хатĕрлекен промышленность юлса пынине пĕтермелле

Пирĕн çĕршыв экономикине аталантарас ĕçре вăрман хатĕрлекен промышленность пысăк вырăн йышăнать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăрăшнипе халăх хуçалăхĕн çак отраслĕне малта тăракан техникăпа пуянлатнă.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Вăрман хатĕрлекен промышленность юлса пынине пĕтересси çинчен» йышăннă постановлени партипе правительство вăрман хатĕрлекен промышленноçа аталантарассишĕн тăрăшнине çĕнĕрен кăтартса парать. Çак постановлени вăрман хатĕрлекен промышленноçăн программăлла документ пулса тăрать, унта çак промышленноçа хăватлăн вăйлатмалли тата ăна социализмла халăх хуçалăхĕн малта пыракан отраслĕ туса хумалли майсене кăтартса панă.

Вăрман хатĕрлекен предприятисен ĕçĕнче ку таранччен пысăк çитменлĕхсем пулнă. СССР Вăрманпа хут промышленность министерстви вăрман хатĕрлемелли тата турттармалли плана çултан-çулах тултарайман, халăх хуçалăхĕн йывăç материал тĕлĕшпе ӳссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтереймен. Хăшпĕр ĕçсене чылай механизациленĕ пулин те, вăрман хатĕрлевĕнче рабочисен ĕç тухăçлăхĕ малтанхи шайрах юлнă. Хатĕрленĕ йывăçăн хăйне ларакан хакĕ питĕ пысăк. Хăйне ларакан хака йӳнетмелли планлă задани нумай çулсем хушши пурнăçланса пымасть.

Вăрман хатĕрлекен промышленность юлса пынине, чи малтан, ĕç вăйĕпе туллин усă курманнипе, рабочисен чылай пайне, уйрăмах çуллахи вăхăтра, тĕп производствăра ĕçлеттерменнипе, пулăшакан ĕçсенче тытнипе ăнлантарса памалла. Сменăпа смена улшăннă вăхăтра пысăк простойсем пулнă пирки тата çынсене ĕç вырăнĕ патне вăхăтра илсе пыман пирки нумай вăрманпромхозсенче ĕç кунĕпе туллин усă курмаççĕ.

Вăрман хатĕрлекен предприятисенче машинăсене тата механизмсене тĕрĕс ĕçлеттерме тата тивĕçлипе сыхласа усрама условисем туса паман. Механизаторсен кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен, çакă вăл машинăсем çĕмĕрлессипе патне илсе пырать тата чылай вăрманпромхозсенче машинăна хирĕçле шухăш-кăмăл сарăлнине пĕлтерет.

«Вăрман хатĕрлекен предприятисен руководителĕсен ĕçĕнчи тĕп çитменлĕх,—тенĕ СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленире,—çакă пулать: вĕсем вăрман хатĕрлевĕн ĕçне механизациленĕ май пулнă улшăнусене ăнланса илмен, панă техникăпа пĕлсе усă курма, ĕçе çĕнĕлле йĕркелеме тата вăрман хатĕрлевĕн ĕçне ертсе пырассине урăхлатса çĕнетме тăрăшман. Вăрман хатĕрлекен организацисен руководителĕсенчен нумайăшĕ механизаци хатĕрĕсемпе тĕрĕс усă курас ĕçре тимсĕр пулнă, вĕсем çĕнĕ техникăран хăраççĕ, ăна вĕренмеççĕ, вăрман хатĕрлес ĕçе сезонлăха пынă рабочисен вăйĕпе тумалли ĕç вырăнне хурса хаклаççĕ, çав вăхăтрах вăрманпромхозсем механизациллĕ пысăк предприятисем пулса тăчĕç, çакă вăл çĕнĕ техникăна ĕçлеттерме вăхăтлăха мар, яланлăха кадрсем суйласа илме, вăрман хатĕрлес ĕçе ертсе пыма опытлăрах организаторсем тата пуçаруллă инженерсемпе техниксем суйласа илме хушать».

Постановленире çапла кăтартса панă: ССР Союзĕн Вăрманпа хут промышленность министерстви техникăна тĕрĕс ĕçлеттерме кирлĕ никĕс туса хатĕрлемен, механизаци ĕçне тивĕçлипе туса пыман, пур ĕçе те комплексла майпа пĕтĕмпех механизацилесе çитермен. Вăрманпромхозсене тĕрлĕ йышши машинăсемпе механизмсем панă, анчах вĕсене запаслă пайсем парса çитермен, тухăçлăрах ĕçлеме май паракан хăватлă машинăсем тăвасси тата вĕсемпе ĕçлеме вĕренесси вăрман хатĕрлекен промышленность ыйтăвĕсенчен юлса пырать. Стационарлă энергетика никĕсĕ çуккине, йывăç турттармалли çулсем япăххине, вăрман юхтармалли тата турттармалли хуçалăх юлса пынине пысăк çитменлĕх тесе шутламалла.

Рабочисемпе служащисен кадрĕсем яланах питĕ кирлĕ пулин те, вăрман хатĕрлекен промышленность предприятийĕсенче ĕç вăйне çирĕплетсе хăварма условисем туса паман. Ĕçе нормăламалли та уншăн тӳлемелли йĕркене—рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн тăрăшассине пурлăх енĕпе интереслентерме май паракан йĕркене—туса хума сахал тăрăшаççĕ.

СССР Вăрманпа хут промышленность министерстви тата министр Орлов юлташ, вăрман хатĕрлекен промышленноçăн техникăпа культура шайне ӳстерессине ертсе пырас, промышленность работникĕсене çĕнĕ техникăна алла илме тата плана тултарассишĕн кĕрешме мобилизацилес вырăнне, промышленность ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсемпе килĕшсе пурăнаççĕ, промышленность работникĕсем хушшинчи машинăна хирĕçле шухăш-кăмăлсене хирĕç кĕрешмеççĕ, çав çитменлĕхсене тӳрре кăларас тесе, тĕрлĕ сăлтавсем шутлашутла кăлараççĕ. Министерство вăрман хатĕрлекен предприятисенчен уйрăлса кайнă, вырăнти партипе совет организацийĕсемпе çителĕксĕр çыхăнса тăрать. Министерствăн тĕп аппарачĕн ĕçĕнче канцелярилле-бюрократла йĕрке пулса тăнă.

Çĕршыва пурăнмалли çуртсем лартма, культурăпа йăла тата ялхуçалăх строительстви валли йывăç материалсем питĕ кирлĕ чухне вăрман промышленноçĕ юлса пынине текех тӳсме çук. Вăрман промышленноçĕ халăх хуçалăхĕн ӳссе пыракан ыйтăвĕсенчен юлса пынине пĕтерес тĕлĕшпе СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ СССР Вăрманпа хут промышленноçне вăрман хатĕрлекен промышленноçа хуçалăхпа техника тĕлĕшĕнчен ертсе пырассине тĕпрен лайăхлатма, унăн ĕçĕнчи çитменлĕхсене çине тăрса пĕтерме тата, 1954 çултан пуçласа, вăрман хатĕрлесе турттарма тата хатĕрленĕ йывăçăн хăйне ларакан хакне йӳнетме государство панă плансене тултармалла тума хушрĕç.

Вăрман хатĕрлес ĕçе планлассине лайăхлатас, ĕç тухăçлăхне ӳстерес тата ăна тĕрĕс йĕркелес, механизмсемпе лайăхрах усă курас тата вĕсене юсас ĕçе йĕркелес, йывăç турттармалли çулсене сыхлас тата вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе партипе правительство палăртнă питĕ пысăк мероприятисене вăрман хатĕрлекен промышленность работникĕсем пысăк çĕкленӳпе кĕтсе илеççĕ. Ялан ĕçлекен рабочисен кадрĕсене тăвас, вăрман хатĕрлекен предприятисене хуçалăхпа техникăн опытлă работникĕсемпе çирĕплетес, вăрман хатĕрлессине техника парса çĕнетес тата вăрман хатĕрлекен предприятисем тăвассине вăйлатас тĕлĕшпе палăртнă мероприятисем питĕ пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Вăрман хатĕрлекен промышленность юлса пынине пĕтерсе ăна малти вырăна кăларас ĕçре парти, совет, профсоюз тата комсомол организацийĕсем пысăк вырăн йышăнма тивĕç. Вĕсем техникăна лайăхрах ĕçлеттерессишĕн, ĕçе пĕлсе йĕркелессишĕн, государство планне пур кăтартусем енĕпе те ăнăçлăн тултарассишĕн социализмла ăмăрту сарас ĕçре вăрманпромхоз работникĕсене активлă пулăшмалла. Вăрман хатĕрлевĕнче ялан ĕçлекен рабочисемпе специалистсен кадрĕсене тăвассишĕн уйрăмах тимлĕн тăрăшмалла, çав кадрсем хушшинче политикăлла воспитани ĕçне лайăх йĕркелемелле, вĕсен материальнăй, йăла тата культура ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн яланах тăрăшмалла.

Вăрман хатĕрлекен промышленноçăн пĕтĕм ĕçне тĕпрен лайăхлатса çĕклесси—государствăн питех те пысăк ĕçĕ. Промышленноçăн çак отраслĕ юлса пынине пĕтерни пурăнмалли çуртсем лартас ĕçе, культурăпа йăла, колхоз тата промышленность строительствине вăйлатма, пирĕн çĕршыври ĕçсыннисен пурнăçĕн материальнăй тата культура шайне малалла лайăхлатма май парать.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă постановленипе хавхаланса, вăрман хатĕрлекен промышленноçри рабочисем, техниксем, инженерсем, служащисем тата хуçалăх руководителĕсем, партипе совет организацийĕсем вăрман хатĕрлекен промышленность юлса пынине пĕтерес тата ăна хăватлăн çĕклентерсе халăх хуçалăхĕн малта пыракан отраслĕ тăвас ĕçе хăйсен пĕтĕм вăйĕсене мобилизацилĕç.

(«ПРАВДА» хаçатăн ноябрĕн 12-мĕшĕнчи умстатьи).

Потребительсен кооперацийĕнчи отчетсемпе суйлавсем

Çак çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче çĕршыври потребительсен кооперацийĕнче отчетпа суйлав кампанийĕ пуçланать. Кампани вăхăтĕнче потребительсен обществисен тата райпотребсоюзсен çĕнĕ правленийĕсемпе ревизи комиссийĕсене суйлаççĕ.

Кăçалхи отчетсемпе суйлавсем пайщиксемпе суту-илӳ работникĕсене партипе правительство совечĕпе суту-илĕве малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă решенисене пурнăçлама мобилизацилемелле.

Отчетпа суйлав кампанине 33 миллиона яхăн пайщик хутшăнать. Вĕсене ялсенчи 24 пин потребительсен обществисен тата 3.600 райпотребсоюзăн управлени органĕсене суйлама тивет.

Пайщиксемпе уполномоченнăйсен пухăвĕсенче çавăн пекех лавкка комиссийĕсемпе столовăй комиссисене тĕмиçе çĕр пин член суйлаççĕ.

Пайщиксен участоксенчи пухăвĕсенче канашлу сасăпа потребительсен обществисенче тăман çынсем те пулма пултараççĕ.

Потребительсен кооперацийĕнчи отчетсемпе суйлавсем 1954 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен пыраççĕ. (ТАСС).

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Ялти çĕнĕ магазинсем

Потребительсен кооперацийĕ ялă районсенче суту-илӳ предприятийĕсен хисепне чылай ӳстерет. ТАСС корреспондентне Центросоюзра пĕлтернĕ тăрăх, 1954 çулта ялсенче çĕнĕрен 7 пине яхăн магазин уçмалла, вăл шутра—590 универмаг, 420—районсенче апат-çимĕç сутакан магазин, 2.375—ялти магазин, 420—культура таварĕсем сутакан магазин т. ыт. те.

1954 çулта нефть продукчĕсем сутакан лавккасем валли 1.200 çурт тата пĕр пин ытла специализациленĕ магазин валли çĕнĕ çурт лартма палăртнă. Мĕнпур районсен центрĕсенче те универмагсем валли çуртсем лартаççĕ. Ялти кашни потребительсен обществинче пĕр универмагран кая мар пулать.

Пысăкрах ялсенче ятарласа атă-пушмак, хатĕр кĕпе-тумтир тата строительство материалĕсем сутас ĕçе организацилеççĕ.

Кунсăр пуçне Центросоюз правленийĕ 1954 çулта тĕрлĕ таварсем усрамалли 930 склад, 1.150 тăвар склачĕ, 102 пысăк холодильник т. ыт. те лартма палăртнă.

Магазинсем çук инçетри ялсенче тавар сутассине лайăхлатас тесе таварсене илсе пырса сутмалла тăваççĕ. Çав ялсене çирĕп расписани тăрăх куçса çӳрекен лавккасем пымалла тăваççĕ. (ТАСС).

Механизаторсем валли—вагонсем

АЛМА-АТА, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Казах ССР Совхозсен министерствин Алма-Атари литейно-механически завочĕ трактор бригадисем валли уй-хирте куçарса çӳремелли вагонсем тăвать. Ĕнер завод çулталăкăх план шучĕпе юлашки вагон туса кăларнă. Вагонсен хăйне ларакан хакне чылай чакарнă.

Алма-Атара тунă пĕчĕк вагонсене Казахстанри, Кубаньри, Çĕпĕрти тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи совхозсен трактористсемпе комбайнерĕсем мухтаççĕ.

Халĕ заводри конструкторсем вагонсен йывăрăшне чакармалли, тĕнĕлĕсемпе кустăрмисене, котельнăй установкине лайăхлатмалли, çавăн пекех тата вагонсен тулаш енне илемлĕрех тумалли майсене тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Планран ирттерсе

ВЛАДИВОСТОК, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Приморьери пулă консерви тăвакан промышленноçĕн предприятийĕсем çулталăкри заданирен ирттерсе пиншер ещĕк продукци туса кăларнă.

Нумай ĕçсене механизациленине тата автоматизациленине пула пĕлтĕрхинчен 17 процент ытларах пулă консерви туса кăларнă. Скумбрия пулăран тунă консервсене ĕçсыннисем нумай илеççĕ. Ун пек консервсене иртнĕ çулхинчен 1.100 пин банка ытларах туса хатĕрленĕ.

Ялхуçалăхĕнчи çĕнĕ техника

Çĕрулми пухса кĕртмелли комбайн «КОК-2». Ăна «Рязсельмаш» завочĕ туса кăларать. Ку комбайнпа хăйăрлă тата хăйăрлă-тăмлă çăмăл тăпрасем çинче ĕçлесе çĕрулми кăлараççĕ. Комбайн çĕрулмине чавса кăларать, улмисене тунинчен тата тăпраран уйăрать, çĕрулмине корзинкăсене тултарать. Комбайн механизмĕсене «ДТ-54» тракторăн карданнăй валĕпе ĕçлеттереççĕ.

«КОК-2» комбайн пĕр кунта тăватă гектар çинчи çĕрулмине пухса кĕртме май парать. Комбайна ĕçлеттерме тракториста пĕрле пилĕк-çичĕ çын кирлĕ. 1954—1955 çулсенче çакăн пек комбайнсем сакăр пин штук туса кăларма палăртнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çĕрулми пухса кĕртмелли комбайн «КОК-2».

Э. ЕВЗЕРИХИН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан Аслă çар академийĕнчен вĕрентсе кăларнă ятпа пулнă пуху

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче Совет Çарĕн Центральнăй театрĕнче К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан Аслă çар академийĕнче вĕренекенсен тата профессорсемпе преподавательсен савăнăçлă ларăвĕ пулнă. Унта ССР Союзĕн Оборона министерствин центральнăй управленийĕсен, çар ĕçне вĕренмелли аслă шкулсен представителĕсем, Мускаври партипе совет организацийĕсен представителĕсем пынă. Савăнăçлă пухăва Академире вĕреннисен черетлĕ выпускĕ пулнă ятпа ирттернĕ. Савăнăçлă пухăва Академи начальникĕ çар генералĕ В. В. Курасов уçнă.

Аслă çар академийĕ ăна уçнăранпа Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем валли пысăк квалификациллĕ темиçе пин командир вĕрентсе хатĕрленĕ тата совет çар наукине аталантарас енĕпе пысăк ĕçсем тунă. Академирен вĕренсе тухнисем Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче те, вăрçă хыççăнхи вăхăтра та хăйсем çарти опытлă начальниксем пулнине, хамăр халăха, Коммунистсен партине тата Совет правительствине чунтан-чĕререн парăнса тăнине кăтартса панă.

Кăçал Академи Совет Хĕçпăшаллă Вăйĕсем валли çар ĕçĕнчи çĕннине тата малта тăраканне пурне те пурнăçлама, çар часĕсенче практикăлла захачĕсене ăнăçлă татса пама тата совет çар наукине малалла аталантарса пыма пултаракан генералсен, адмиралсен, офицерсен çĕнĕ отрядне вĕрентсе кăларнă.

Савăнăçлă пухура Академире вĕренекенсем тата профессорсемпе преподавательсем умĕнче Генеральнăй штаб начальникĕ Совет Союзĕн Маршалĕ В. Д. Соколовский сăмах тухса каланă.

Савăнăçлă пуху хыççăн ССР Союзĕн Оборона Министрĕ патĕнче йышăну пулнă. Йышăнăва К. Е. Ворошилов ячĕпе тăракан Аслă çар академийĕнчен вĕренсе тухакансене тата унти профессорсемпе преподавательсене хисеплесе ирттернĕ.

ГИДРОСТРОИТЕЛЬСЕН КУЛЬТУРА ДВОРЕЦĔ

ЖИГУЛЕВСК (Куйбышев облаçĕ), ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта гидростроительсен Культура дворецĕ уçăлнă. Унта 500 çын вырнаçмалăх зал, кĕнеке хранилищи, вуламалли зал, художествăлла пултарулăх кружокĕсем ĕçлемелли кабинетсем, спорт залĕ пур.

Двореца питĕ илемлĕ тунă. Фоепе фестибюлĕн колоннисене мрамортан тунă пингтăсемпе витнĕ, тĕп фасадра çӳлĕ колоннăсем тунă.

Ялти халăха мĕнле таварсем кирлине тĕпчесе вĕренни

Центросоюз правленийĕ ялти халăха мĕн йышши промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç таварĕсем кирлине тĕпчесе вĕренме йышăннă. Çĕршывăн тĕрлĕ районĕсенче 40 контрольпе ассортимент пункчĕсем уçма йышăннă. Çав пунктсен ялта пир-авăр, тумтир тата атă-пушмак туянас тĕлĕшпе мĕнле улшăнусем пулнине тăтăшах учета илсе тăмалла. Кунсăр пуçне, Центросоюзăн главнăй управленийĕсем хуçалăхра кирлĕ, галантерея тата культура таварĕсем т. ыт. те ыйтни çинчен информацисем илсе тăрассине организацилеççĕ.

Райпотребсоюзсен правленийĕсемпе потребительсен обществисен правленийĕсене таварсен заявкисене тунă чухне магазинсемпе лавккасен тата тавар илекенсен сĕнĕвĕсемпе хушнисене шута илме хушнă. (ТАСС).

Горняксен ĕçри çĕнтерĕвĕ

КИСЕЛЕВСК (Кемерово облаçĕ), ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Кагановичуголь» трестăн 3-мĕш шахтинче ĕçлекен щитовиксен Глушков юлташ ертсе пыракан бригади ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунă. Сентябрьте бригада 17.000 тонна çĕр кăмрăкĕ кăларнă. Çакă вăл щитовой забойпа вăтам шутпа кăларакан кăмрăк хисепĕнчен икĕ хут нумайрах пулать.

Цирулев юлташ ертсе пыракан участокра ĕçлекенсем çулталăкра планран ирттерсе вунă эшелон ытла топливо кăларнă. Октябрьте заданирен ирттерсе 3.300 тонна кăмрăк тиесе ăсатнă.

Ноябрьте малтанхи кунсенчех пуçласах Глушков юлташăн бригади щитовой забойпа уйăхне 20 пин тонна кăмрăк кăларассишĕн кĕрешет.

ФЗО шкулĕсене вĕренме илеççĕ

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче СССР Культура министерствин ФЗО шкулĕсемпе сăрт-ту промышленность шкулĕсене вĕренме илес ĕç пуçланнă. Çак шкулсене вуншар пин çамрăксемпе хĕрачасене илмелле. Вĕсем строительсен тата сăрт-ту промышленноçĕнчи пысăк квалификациллĕ рабочисем пулаççĕ.

Строительсен вунă уйăхлăх шкулĕсенче çамрăксем çурт тăррине витекенсем, малярсем, кантăк лартакансем, гранитчиксем-мраморщиксем, штукатурсем-усадчиксем тата ытти специалистсем те пулса тухаççĕ.

Шкулсене 60 пин ытла заявлени панă та ĕнтĕ. Архангельск, Новосибирск, Томск, Иваново, Орлов тата ытти облаçсенче заявленисем ытлашшипех панă.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче

Паянхи Чурачăк

Республика центрĕпе тата ытти район центрĕсемпе Чурачăк шоссе çулĕпе çыхăнса тăрать—Шупашкарпа Канаш хушшинчи мăн çул Чурачăк витĕр иртет. Район центрĕнчен пилĕк километрта Трак разъезчĕ. Юлашки икĕ-виçĕ çул хушшинче Чурачăкпа Красноармейски районне çыхăнтаракан мăн çула туса пĕтернĕ. Район центрĕ çумĕпе Кĕçĕн Çавал юхса иртет. Çавал çинче Явтуш, Шăхаль гидроэлектростанцийĕсем таврари колхозлă ялсене электричествăпа çутатаççĕ.

Партипе правительство ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн, вĕсен культурăлла шайне ӳстерессишĕн тăрăшни Чурачăк ӳссе пыни аван кăтартса парать. Юлашки икĕ-виçĕ çул хушшинче кунта çĕнĕ çуртсем нумай туса лартнă. Район Совечĕн, парти райкомĕн икĕ хутлă çуртĕсем, вăтам шкулăн, больницăн, промкомбинатăн, ветлечебницăн пысăк çурчĕсем илемлĕн курăнса лараççĕ. Акă çу завочĕ. Кунта иртнĕ çулсенче заводри мĕнпур ĕçсене механизациленĕ, йывăр ĕçсене пĕтĕмпех электричество вăйĕпе тăваççĕ. Савна пула завод тăхăр уйăхра çулталăкри производство планне тултарчĕ.

Район центрĕнчи радиоузел урлă Сĕрпӳел, Паваркасси, Йӳçкасси, Вутлан, Хурнуй, Пăрсайкасси ялĕсенчи колхозниксен килĕсене радиофикациленĕ. Радио кĕртнĕ килсен хисепĕ халĕ 280 ытла.

Октябрьти Социализмла Аслă революциччен Чурачăкра больница пулман, фельдшер пунктĕнче пĕр фельдшер çеç ĕçленĕ, чирлĕ çынсене сыватмалли стационар пулман. Халĕ больницăра 50 вырăнлă стационар пур, сакăр врач, вăтам пĕлӳ илнĕ 17 медицина работникĕсем ĕçлеççĕ. Больницăра амбулатори, ача çуратмалли пӳлĕм, тĕрлĕрен чирсене пăхмалли тăхăр кабинет ĕçлет.

1952 çулччен Чурачăк районĕнче МТС пулман. Районти колхозсен уй-хирĕсенче Сĕрпӳ, Шăхасан МТС-ĕсенчи машинăсем ĕçленĕ. Юлашки çулсенче кунта МТС организациленĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех МТС çĕнĕ ялхуçалăх машинисемпе пуянланчĕ. Халĕ МТС-ра самоходнăй комбайнсем 20, тракторсем 42, сложнăй молотилкăсем 8, силосорезкăсем, плугсемпе сеялкăсем, çĕрулми лартмалли машинăсем тата нумай тĕрлĕ ялхуçалăх машинисем, икĕ электродвигатель, 10 автомашина пур. МТС çĕнĕ техникăпа пуянланни — тырпул тухăçлăхне ӳстерме, обществăлла выльăх-чĕрлĕхе малалла аталантарас тĕлĕшри йывăр ĕçсене механизацилеме май пачĕ.

Машина-трактор станцинче строительство ĕçĕсем анлăн сарăлса пыраççĕ. Кăçал МТС-ăн кантурне кирпĕчрен туса пĕтернĕ. Икĕ хваттерлĕ çурт, пысăк сарай тунă. Канашпа Шупашкар хушшинчи мăн çул айккинче ешĕрекен йывăçсем хӳттинче типовăй мастерскойăн стенисем çĕкленеççĕ. Ку мастерскоя кăçал туса пĕтерсе ĕçе ямалла.

Ĕçсыннисен пурнăçĕпе культурăлла шайĕ тăтăшах ӳссе пынă май культура таварĕсем туянасси те ӳссе пырать. Район центрĕнчи ĕçсыннисем раймагра, культмагра паха пусмасем, таварсем, костюмсем, велосипедсем, мотоциклетсем, радиоприемниксем, хуткупăссем, патефонсем нумай туянаççĕ. Кунта халĕ чайнăй, виçĕ магазин, темиçе ларек, пĕр закусочнăй ĕçлет. Ĕçсыннисен ыйтăвне тивĕçтерме çĕвĕ çĕлемелли, атă-пушмак юсамалли мастерскойсем ĕçлеççĕ.

Совет влаçĕ пуличчен Чурачăкра культура çурчĕ пулман. Чурачăкри ĕçсыннисем кино çинчен тĕлленмен те. Халĕ район центрĕнче 200 çынна яхăн вырнаçмалăх зал пур, унта ĕçсыннисем касерень çĕнĕ кинокартинăсем кураççĕ, докладсемпе лекцисем итлеççĕ. Район центрĕнчи вăтам шкулта 30 учитель ĕçлет. Унта çулсерен 560 ача вĕренет. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче 60 ача вĕренсе тухнă. Чурачăк вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухнă çĕршер çамрăксем учительсем, агрономсем, инженерсемпе техниксем пулса ĕçлеççĕ, чылайăшĕсем — Совет Çарĕн офицерĕсем.

Çак кунсенче кунта кирпĕчрен пысăк пекарня туса пĕтерсе ĕçе яраççĕ. Районти апат-çимĕç комбиначĕ крахмал тăвакан цех тума тытăннă. МТС-ра клуб, столовăй, ача сачĕ, механизаторсене пурăнмалли хваттерсем тума палăртнă.

П. ПАВЛОВ, М. ЛАНДЫШ.

Чурачăк районĕн центрĕнче (сулахайран сылтăмалла): больницăпа медпункт çурчĕсем; учреждени çурчĕсем.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕсем.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи парторганизацин конференцийĕ

КПСС XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçласа, районти парторганизаци хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырассине лайăхлатнă. Чылай колхозсен обществăлла хуçалăхĕ çирĕпленнĕ. Ялхуçалăх артелĕсен пайланман фончĕ юлашки çулта 13 процент ӳснĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх хисепĕ нумайланнă. КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ хыççăн колхозсене 19 агрономпа 11 зоотехник янă.

Кунпа пĕрлех конференци çакна палăртрĕ: районти колхозсен хуçалăхĕ çителĕксĕр аталанать, тырпул тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ пысăк мар. Чылай колхозсем çĕрĕçĕнчи агротехникăна пăсаççĕ, пусă çаврăнăшне йĕркелемеççĕ, минераллă тата вырăнти удобренисемпе сахал усă кураççĕ. Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе кирлĕ пек хакламаççĕ, выльăх апачĕ сахал хатĕрлеççĕ, çĕнĕ витесем тăвас, киввисене юсас ĕç начар пулса пырать.

МТС техникипе çителĕклĕ усă курманни те çĕрĕçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç культурине ӳстерме чăрмантарать.

Партилле-политикăлла тата партилле-организацилле ĕç начар. Чылай пуçламăш парторганизацисем парти пухăвĕсене вăхăтра ирттермеççĕ. Коммунистсен политикăлла вĕрентĕвне кирлĕ пек йĕркелемен. Партипе государство дисциплинине пăсакан коммунистсем те пур.

— Кăçалхи çураки хыççăн,— тет делегат Данилов юлташ,— районти куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава ВКП(б) ячĕпе тăракан колхоза панăччĕ. Паянхи куна ку колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене тăвас тĕлĕшпе кая юлчĕ: авăн çапса пĕтермен, выльăх витисене хĕле хатĕрлемен. Апла пулин те районти Хĕрлĕ ялав çав колхозрах шутланать. Ку тĕлĕшпе парти райкомĕпе райсовет исполкомĕ колхозниксен социализмла ăмăртăвне пуçарса ертсе пыманнине кăтартса парать.

Парти райкомĕ,— тет Шинжаев юлташ,— пропагандăпа агитаци ĕçне хăйĕн работникĕсен вăйĕпе кăна туса пырасса шаннă. Ертсе пыракан работниксем халăх хушшинче лекцисемпе докладсем сайра хутра çеç тăваççĕ.

МТС директорĕ Шорников юлташ партипе правительство постановленийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе умра тăракан ĕçсем çинчен каласа пачĕ. МТС-ра пысăк строительство пуçланмалла. Çывăх вăхăтра типовăй мастерской, машинăсем лартмалли тăватă сарай, икĕ хваттерлĕ çуртсем тума палăртнă.

Шорников юлташ парти райкомĕ, райсовет исполкомĕ тата Ялхуçалăх министерстви МТС-сене ĕçре сахал пулăшнине кăтартса парать.

— Ку тарана çитсе те,— тет вăл,— квалификациллĕ кадрсем çителĕксĕр, 9 механикран пĕри çеç вăтам шкул пĕтернĕ. Апла пулин те Ялхуçалăх министерстви пирĕн МТС-а кадрсемпе çирĕплетессине çителĕксĕр пăхать.

Горючи, сĕрмелли материалсем илме Шупашкара çити каймалла. Ялхуçалăх министерствин инçетри районсем валли нефтебазăсем çывăхарах туса парас ыйтăва татса памалла.

Чернов юлташ кадрсене суйласа илес тĕлĕшпе пулса пыракан çитменлĕхсене кăтартса пачĕ.

Сыромятников юлташ колхоз председателĕсене воспитани парас тĕлĕшпе райсовет исполкомĕ çителĕксĕр ĕçлени çинчен каларĕ. Колхоз председателĕсен семинарĕсене ирттерме тĕплĕн хатĕрленмеççĕ, çавăнпа семинарсем яланхи канашлусем пек кăна иртеççĕ.

Райком отчечĕ тăрăх пурĕ 21 çын тухса каларĕ. Конференци райкомăн çĕнĕ составне суйларĕ.

Райком пленумĕ КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма Филиппов юлташа, райком секретарĕсем пулма Григорьев, Ермолаев юлташсене суйларĕ.

Н. САВЕЛЬЕВ.

Коммунистсем производствăра малта пыраççĕ

Уяв умĕнхи социализмла ăмăртура пирĕн цех коллективĕ пысăк çĕнтерӳ турĕ: октябрьти плана срокчен эрне малтан тултарчĕ, уйăх вĕçлениччен планран ирттерсе 5 пин кубометр хăма çурса кăларчĕ.

Цех коллективĕнче коммунистсем — пысăк вăй пулса тăраççĕ. Пирĕн парторганизацире вĕсем вунултă. Коммунистсене производствăн ăнăçлăхне татса паракан участоксене вырнаçтарса тухнă. Сичĕ коммунист производство командирĕсем пулса, ыттисем рабочисем пулса ĕçлеççĕ. Кашни сменăрах коммунист-рабочисем 4—5 шутланаççĕ.

Иртнĕ уйăхсенче хăма çуракан цех ĕçĕнче кăлтăксем нумай пулчĕç. Парторганизаци çав кăлтăксене мĕнле пĕтересси çинчен хăйĕн активпа пĕрле ирттернĕ пухăвĕнче сӳтсе яврĕ. Пуху йышăннă тăрăх, хăма çуракан пиллĕкмĕш рама çине те бассейнран пĕрене парса тăмалла турăмăр. Çакăн хыççăн пиллĕкмĕш рамăн ĕç юхăмĕ чылай лайăхланчĕ.

Халиччен сменăсенче ĕç вăйĕ тан мар пулни цеха пĕр тикĕс ĕçлеме чăрмантарнă. Партбюро сĕннипе пĕррремĕш сменăри квалификациллĕ рабочисен пĕр пайне виççĕмĕш сменăна куçартăмăр. Кун пек туни вырнаçуллă пулчĕ. КПСС членĕ А. Феофанов юлташ ертсе пыракан смена халĕ задание 130 процент таран тултарса ĕçлет.

Пирĕн цех коллективĕ çуртсем тăвакан хĕрлĕ ялавлă цехпа ăмăртса ĕçлет.

Парти членĕ А. Нигматуллинпа парти членĕн кандидачĕ Н. Харитонов юлташсем рамщиксем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем ертсе пыракан бригадăсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура чи лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç: икĕ бригади те уйăхри нормăна 110—112-шер процент тултарчĕç. Нигматуллинпа Харитонов юлташсене СССР Çĕр кăмрăк промышленность министерстви «Социализмла ăмăрту отличникĕ» значокпа наградăланă, заводри хисеп хăми çине кĕртнĕ.

Хăма çуракан цехра виçĕ смена ĕçлет. Вĕсене пурне те коммунист-мастерсем ертсе пыраççĕ. Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура Н. Панков юлташăн смени мала тухрĕ. Вăл октябрьти задание 25 кун хушшинче тултарчĕ, заданирен ирттерсе 2 пин кубометра яхăн хăма çурса пачĕ. Çакă вăл цех коллективĕ виçĕ талăкра тунă ĕçпе танлашать.

Паллах ĕнтĕ, партире тăракан Панков мастерăн паха опытне ытти сменăсен руководителĕсем курмасăр юлма пултарайман. Пĕрремĕш смена та Октябрь уявĕ ячĕпе илнĕ обязательствăна чыслăн пурнăçларĕ.

А. Осипна А. Казаков коммунистсем — сменăсенче пăчкăсене хăйраса тӳрлетекен мастерсем. Вĕсем хатĕрлесе лартнă пăчкăсем яланах пĕр тикĕс ĕçлеççĕ.

Пирĕн парторганизацири хĕрарăм-коммунистсем те производствăра малти ретре пыраççĕ. КПСС членĕ М. Чунина юлташ — тăваттăмĕш разрядри станочница, сменăри нормăна яланах ирттерсе тултарать, М. Иваншина юлташ та лайăх ĕçлет.

Цехри коммунистсем, хăйсен авангардлă рольне кăтартса, мĕнпур рабочисене производство планне ăнăçлă тултарма кĕрешĕве çĕкленеççĕ. Пирĕн задача — уяв умĕн тунă çитĕнĕве çирĕплетсе хăварса, çулталăкри плана срокчен пурнăçласси.

И. ПЕТРОВ,
хăма çуракан цехри партбюро секретарĕ.

Куславккари çуртсем тăвакан завод.

Пропагандист ĕçĕнчи хăшпĕр чăрмавсем

Государство банкĕн Канашри уйрăмĕнчи парторганизаци çумĕнче парти историне вĕренмелли кружока эпĕ кăçалхипе иккĕмĕш çул ертсе пыратăп. Унта пурĕ 18 çын вĕренет. Занятисем планпа йĕркеллĕ иртеççĕ. Кружок членĕсем занятисенче калаçусене активлă хутшăнаççĕ. Уйрăмах Дмитриев, Еромасова, Пыгин, Филиппов, Никитина юлташсем тăрăшса вĕренеççĕ, материала лайăх пĕлнине кăтартаççĕ. Вĕсем яланах конспектсем çырса пыраççĕ.

Занятисем идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртесси пропагандистран килнине асра тытса, эпĕ вĕсене ирттерме тĕплĕн хатĕрленетĕп. Вырăнти материалсемпе тата наглядлăй пособисемпе усă курма тăрăшатăп. Калаçу хыççăн, вĕренекенсене çитес занятине мĕнле хатĕрленмеллине, мĕн вуламаллине, конспект мĕнле çырмаллине кăтартса паратăп.

Партин Центральнăй Комитечĕ парти пропагандин шайне хăпартма, марксизм-ленинизм теорине вĕренес ĕçре догматизмпа начетничествăна пуçĕпех пĕтерме кирлине асăрхаттарчĕ. Ку пиртен, пропагандистсенчен, килет. Çавăнпа та ĕнтĕ пропагандистсен пĕлĕвĕсене ӳстересси çине тимлĕн пăхни кирлĕ.

Кăçал парти вĕренĕвĕ пуçланнăранпа КПСС Канаш хула комитечĕ пропагандистсен семинарне виçĕ хутчен ирттерчĕ. Малтанхи семинар «Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ 50 çул тултарни», СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессинче каланă сăмах, КПСС Центральнăй Комитечĕн кăçалхи сентябрьти Пленумĕн постановленийĕпе партин Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Н. С. Хрущев юлташ çав пленумра тунă доклад тăрăх лекцисем туса панипе иртрĕ. Иккĕмĕш семинарта КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕпе Н. С. Хрущев юлташăн доклачĕ тăрăх калаçу пулса иртрĕ.

Эпĕ лекцисен кăлтăкĕсем пирки чарăнса тăрасшăн мар, иккĕмĕш семинарта пулнă хăшпĕр çитменлĕхсене çеç кăтартасшăн. Семинарта калаçăва хулари 1-мĕш номерлĕ шкулта истори вĕрентекен И. Захаров учитель ирттерчĕ. Калас пулать, вăл ялхуçалăхне пропагандистсенчен ытла пĕлмест. Çĕрулмипе пахча çимĕçсене тăваткал тĕмĕн лартасси, çĕрулмине пăхса ӳстерессине тата пухса кĕртессине механизацилесси çинчен панă ыйтăва та семинар руководителĕ ответлемесĕр хăварчĕ.

Малтанхи семинарта çак темăпа ялхуçалăх специалисчĕ — ялхуçалăх механизаци училищин директорĕ З. Дмитриев юлташ лекци вуласа панăччĕ. Иккĕмĕшĕнче те калаçу ирттерме ăнах хушмани пропагандистсемшĕн пачах ăнланмалла мар пулчĕ. Хулара ялхуçалăх специалисчĕсем сахал мар, çапах та калаçу ирттерме темшĕн вĕсенчен пĕрине хушман.

И. Захаров юлташ семинарти калаçăва шкулти экзамен умĕнхи консультаци евĕрлĕ ирттерчĕ, вырăнти материалсемпе усă курмарĕ. Республикăри, районти малта пыракан колхозсен опычĕ, кая юлса пыракан колхозсем çинчен, Канашри промышленность предприятийĕсем ялхуçалăхне пулăшас енĕпе мĕн туни çинчен сăмах та пулмарĕ.

Пропагандистсем нумайăшĕ семинара хатĕрленмесĕр пынă. Унта 50 пропагандиста яхăн пухăннă, анчах семинар ĕçне виççĕн-тăваттăн кăна активлă хутшăнчĕç. Кун пек семинарсем, паллах, пропагандистсен пĕлĕвне ӳстерме пулăшаймаççĕ.

Партин хула комитечĕн библиотеки пропагандистсене çителĕклĕ пулăшмасть. Унта вырăнти материалсенчен тунă витрина е уйрăм кĕтес çук. Канаш районĕнчи колхозсем мĕнле ĕçленине пĕлме райсовет исполкомĕнче ĕçлекенсенчен ыйтас пулать е «Коммунизмшăн» хаçатăн подшивкисене пĕтĕмпе вуласа тухсан çеç хăшпĕр ыйтусене пĕлме пулать.

Кружоксенче вĕренекенсене занятисене лайăх хатĕрленме кĕнекесем çителĕксĕрри те чăрмантарать. Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче каланă сăмаха, КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ «СССР ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление, Пленумра Н. С. Хрущев юлташ тунă доклада пичетленĕ брошюрăсем хулари кĕнеке магазинĕнче те, «Союзпичетĕн» районти уйрăмĕнче те çук.

Çак çитменлĕхсене пĕтерни пропагандистсен ĕçне чылай лайăхлатма тата çăмăллатма пулăшни пулĕччĕ.

М. ВАСИЛЬЕВ,
парти историне вĕрентекен кружок руководителĕ.

Парти вĕренĕвĕ çинчен

КПСС Элĕк райкомĕн бюровĕ районти парторганизацире политшкулсемпе кружоксенчи малтанхи занятисен итогĕсем çинчен сӳтсе яврĕ. Кăçал районта политшкулсемпе марксизм-ленинизм теорине вĕренмелли кружоксем 48 йĕркеленĕ. Вĕсенче коммунистсемпе партире тăман кадрсем — пурĕ 625 çын вĕренет. 306 çын хăйсен политикăлла пĕлĕвĕсене харпăр хăй тĕллĕн вĕренсе ӳстерет.

КПСС райкомĕн бюровĕ парти вĕренĕвĕнчи пысăк çитменлĕхсене те палăртрĕ. Горький ячĕпе, Киров ячĕпе тăракан, «Молния» колхозсемпе сӳс-кантăр заводĕн строительствинчи парторганизацисем çумĕнче йĕркеленĕ политшкулсемпе кружоксенче занятисем пачах пулса иртмен.

КПСС райкомĕн бюровĕ парти вĕренĕвĕнчи çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

В. ПЕТРОВ.

ТАСС хирĕçлесе калани

Франс Пресс агентстви, Англирен илнĕ хыпар тесе, çакăн пек хыпар сарнă: СССР Министрĕсен Совечĕн Председательне Г. М. Маленкова тăватă державăн — СССР, США, Англи тата Франци Правительствисен Пуçлăхĕсен канашлăвне хутшăнма сĕнӳ панă пулать. Г. М. Маленков вара В. М. Молотов урлă Англи Правительствине хăй çакăн пек канашлу пухассипе килĕшни çинчен пĕлтернĕ пулать.

ТАСС çакăн çинчен пĕлтерме полномочи илнĕ: çӳлте асăннă хыпар чăнлăхпа нихăш енчен те килĕшсе тăмасть. Вăл хыпара Бермуд утравĕсем çинче ирттерме палăртнă США, Англи тата Франци Правительствисен Пуçлăхĕсен сепаратнăй канашлăвĕн тĕллевĕсене пытарас шутпа шухăшласа кăларнă пулмалла.

СССР орденĕсемпе медалĕсене пани

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕн заместителĕ М. П. Павлов юлташ çак кунсенче Канашра СССР Верховнăй Совет Президиумĕ наградăланă çынсене орденсемпе медальсем панă.

Чугун çул çинче нумай çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн Ленин орденĕ Хусан чугун çулĕн Канашри резервĕн главнăй кондукторĕ Н. И. Подузиков юлташ тата чугун çулăн Канаш дистанцийĕнчи контроль ĕçне тăвакан нормировщик И. Я. Яковлев юлташ илнĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ çак юлташсем илнĕ: Н. Г. Васин, Г. Г. Газизов, С. З. Евстигнеев, Г. Н. Кобин, Т. Ф. Федотов — чугун çулăн Канаш дистанцийĕнчи бригадирсем, С. С. Гуськов, А. В. Кошельков, М. С. Куприянова — Канаш станцийĕнчи стрелочниксем, Ф. Е. Димитриев — разъездри дежурнăй, Е. Н. Духова — чугун çулăн Канаш дистанцийĕн аслă бухгалтерĕ, П. И. Игнатьев — Канаш станцийĕн главнăй кондукторĕ, В. И. Каяшев — Пинер разъезчĕн начальникĕ, Е. В. Медведев — Вăрнар станцийĕн дежурнăйĕ, А. М. Терюкалов — Канашри пăравус деповĕн инструктор-машинисчĕ, П. Т. Тимофеев — Çаракла разъезчĕн дежурнăйĕ, Н. Н. Усягин — чугун çулăн Сергач уйрăмĕнчи Перевоз станцийĕн стрелочникĕ, С. А. Чирков — 604 километрти разъезд дежурнăйĕ, Н. А. Юшков — чугун çулăн Канаш дистанцийĕн главнăй бухгалтерĕ, А. Е. Яковлев — Канашри пăравус деповĕн техника кабинечĕн заведующийĕ.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медаль 25 çынна, «Ĕçре палăрнăшăн» медаль 23 çынна панă.

Медицина енĕпе нумай çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн Ленин орденĕ Тăвай районĕнчи Эльпуç участокĕнчи амбулатори фельдшерĕ В. С. Симулин юлташ илнĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ А. А. Алексеев юлташа — Йĕпреç районĕнчи Чернореченски фельдшер пункчĕн заведующине панă.

«Хисеп палли» орденĕ çак юлташсем илнĕ: М. И. Иванов — Канаш станцийĕн врач участокĕнчи фельдшер, В. С. Иванова — Шăхасан районĕнчи больница акушерки, С. Ф. Фадеева — Шăхасан районĕнчи Ентриялĕнчи фельдшер-акушер пункчĕн заведующийĕ, А. С. Шилин — Тăвай районĕнчи Тĕмер участокĕнчи больницăн главнăй врачĕ.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медаль çак юлташсене панă: Т. С. Воробьевăна — Канаш хулинчи больница врачне, М. Н. Ивановăна — Йĕпреç районĕнчи ача çуратмалли çурт акушеркине, С. П. Титовăна — Шăхасан районĕнчи Ушанарти фельдшер пункчĕн заведующине.

«Ĕçре палăрнăшăн» медаль çак юлташсем илнĕ: А. В. Ванина — медицина сестри, Калинино районĕнчи больница лаборантки, Е. Г. Григорьева — Комсомольски районĕнчи Хырай Енелти фельдшер-акушер пункчĕн заведующийĕ, В. Е. Егорова — Шăхасан районĕнчи больницăри медицина сестри, М. Ф. Ермакова — Вăрнарти ачасене шăмă туберкулезĕнчен сыватакан санаторин медицина сестри, В. И. Иванова — Шăхасан районĕнчи Ухманти фельдшер-акушер пункчĕн заведующийĕ, И. А. Андреев — Тăвай районĕнчи Енĕш Нăрвашри фельдшер-акушер пункчĕн заведующийĕ, С. М. Коннова — Калинино районĕнчи Ассакассинчи фельдшер-акушер пункчĕн заведующийĕ тата ыттисем те. «Ĕçре палăрнăшăн» медаль пĕтĕмпе 26 çын илнĕ.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе нумай çул хушши ĕçленĕшĕн «Хисеп палли» орденĕ А. Л. Леонтьев юлташа — Шăхасан районĕнчи зоотехника панă.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медаль П. Ф. Курбатов юлташ — Комсомольски районĕнчи зоотехникăпа ветеринари пункчĕн заведующийĕ, В. В. Покаместова юлташ — Çĕмĕрле районĕнчи зоотехник илнĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес енĕпе нумай çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ С. А. Игорев юлташа — хатĕрлев енĕпе Вăрнар районĕнчи ĕçлекене панă.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медаль О. Г. Григорьева юлташ — потребсоюзăн Вăрмарти çăмартапа чăх-чĕп комбиначĕн çăмарта сортлаканĕ тата Р. Ф. Федорова юлташ — çав комбинатра çăмартасене ещĕке хураканĕ илнĕ.

«Ĕçре палăрнăшăн» медаль А. И. Скотяева юлташа — «Заготживсырьен» Вăрнар районĕнчи хатĕрлев кантурĕн аслă бухгалтерне панă.

Нумай çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн МТС-сен тата ялхуçалăх механизаци шкулĕн специалисчĕсемпе работникĕсем те орденсемпе медальсем илнĕ.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ М. В. Верхунов юлташа — Вăрмар машина-трактор станцийĕн главнăй механикне, Г. С. Мамонтов юлташа — Йĕпреç машина-трактор станцийĕн мастерской заведующине панă.

Канашри ялхуçалăх механизаци шкулĕн преподавателĕ В. Н. Орлов юлташ «Ĕçри хастарлăхшăн» медаль илнĕ.

Куславкка машина-трактор станцийĕн механикне Г. А. Баганов юлташа, çав МТС-ри аслă механике П. П. Митрофанов юлташа «Ĕçре палăрнăшăн» медаль панă.

Правительство наградăланă юлташсене М. П. Павлов юлташ орденсемпе медальсем илнĕ ятпа саламланă тата ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă суннă.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн материалĕсене чăвашла кăларнă

Чăваш АССР государство издательстви КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн материалĕсене: Н. С. Хрущевăн «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕнче 1953 çулхи сентябрĕн 3-мĕшĕнче тунă докладне тата «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ 1953 çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче йышăннă постановлене чăвашла куçарса уйрăм кĕнекесем туса пичетлесе кăларнă.

Малта пыракан колхозсен опычĕ

Обществăлла хуçалăх ӳсет, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланать

«Правда» хаçат издательстви «Малта пыракан колхозсен опычĕ» ятлă сборник пичетлесе кăларнă. Сборникра Совет Союзĕнче малта пыракан вунă колхоз опытне çутатса панă. Çав колхозсенчен пĕри — пирĕн республикăри Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз.

Сборника кĕртнĕ «Обществăлла хуçалăх ӳсет, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланать» статьяра Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ — СССР Верховнăй Совет депутачĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ С. Е. Коротков юлташ колхозниксем кашни гектартан 300-шер пăт тĕштырă туса илессишĕн, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатассишĕн кĕрешни çинчен, колхозниксен пурнăçĕ çултан-çул лайăхланса пыни çинчен каласа парать.

Юлашки çирĕм çул хушшинче, тесе çырать Коротков юлташ, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕ улттă-çиччĕ хут ӳснĕ. Колхоз çултан-çул вăйлă тырпул туса илет. Юлашки çичĕ çул хушшинче тĕштырпул, пăрçа йышши тата кĕрпе культурисем вăтам шутпа гектар пуçне 21-шер центнер туса илнĕ.

Нумай çулсем хушшинчи опыт тăрăх эпир çакна пĕлсе çитрĕмĕр, тесе çырать малалла Коротков юлташ, вăйлă тырпул туса илмелли тĕп условин вăл курăк акмалли пусă çаврăнăшĕ туса хуни, çӳлте тăракан агротехника, çĕнĕ агротехника меслечĕсемпе творчествăллăн усă курни пулать.

Çĕрулми культурине ӳстересси уй-хирсене сум-курăксенчен тасатса çитерни. Çавăнпа та колхозниксем таса çĕртме пуссисене пăрахăçа кăларса, çĕртме пуссисенче çĕрулми лартса тума йышăнчĕç. Халĕ эпир пĕтĕм çĕртме пуссинче çĕрулми туса илетпĕр. Ир çитĕнекен çĕрулмине кĕрхи ыраш акмалли вырăна, юлса çитĕнекен çĕрулмине — сурхи тулă акмалли вырăна лартса тăватпăр.

Пирĕн артель практики çакна кăтартса пырать: ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре тарăн сухалани, уй-хире органикăллă тата минераллă удобренисем çителĕклĕ кăларни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Халĕ пирĕн алăра МТС-ăн хăватлă техники тăрать. Кирлĕ чухлĕ тислĕк пухма май пур. Минераллă удобренисем нумай кӳрсе килетпĕр. Кашни пусă çаврăнăшĕнче эпир пĕрер хире удобренисем паратпăр, пĕр гектар çине 40—50 тонна тислĕк, 7—8 центнер минераллă удобрени кăларатпăр. Тарăн сухалани тата удобренисем ытлашшипех çителĕклĕ пани пирĕн условисенче тырпул тухăçне чылай ӳстерет.

1951 çулта 30 сантиметр тарăнăш сухаланă тата вырăнти удобренисем гектар пуçне 50 тонна таран панă участоксем çинчен гектар пуçне вăтам шутпа 47-шер центнер сурхи тулă туса илнĕ. 30 сантиметртан тарăнрах сухаланă участоксенче 18 гектар çинчен тулă 50,1-шер центнер, 64 гектар çинчен сĕлĕ 54,3-шер центнер туса илнĕ.

Тырпул тухăçне ӳстерессишĕн кĕрешсе эпир суха кассине тарăнлатса пынисĕр тата удобренисемпе анлăн усă курни ĕр пуçне ытти агротехникăлла ĕçсене пурнăçласси çине те тимлĕн пăхатпăр. Эпир мĕнпур уй-хире пысăк тухăç паракан лайăх вăрлăхсем акатпăр. Акмалли пысăк нормăсемпе усă куратпăр. Тĕслĕхрен, сурхи тулă гектар пуçне 2,5 центнер таран акатпăр. Çавăн пекех хĕреслĕ майпа акмалли меслетпе усă куратпăр.

Мĕнпур уй-хир ĕçĕсене агротехникăлла лайăх срокçенче ирттеретпĕр.

Наука çитĕнĕвĕсемпе тата малта пыракан опытпа усă курса колхоз ĕçченĕсем тырпул тухăçне çултан-çул ӳстерсе пыраççĕ. 1944—1946 çулсенче вăтам шутпа сурхи тулă гектар пуçне 14-шар центнер, 1947—1949 çулсенче — 27,8-шер центнер, 1950—1952 çулсенче — 35,3-шер центнер таран туса илнĕ. Пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле гектар пуçне 300 пăт тĕштырă туса илме палăртнă. Пирĕн артель çавăн пекех çĕрулми, пахча çимĕç, выльăх апачĕ, техникăллă культурăсем туса илессине те çултан-çул ӳстерсе пырать.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсем çинче чарăнса тăрса, автор çапла çырать:

Пирĕн хуçалăхăн тепĕр пысăк отраслĕ вăл выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç пулать. Юлашки çулсенче колхоз мĕнпур выльăхсен шутне чылай ӳстерчĕ. Хальхи вăхăтра эпир суха тăвакан кашни 10 гектар çĕр пуçне пĕрер лаша, 5-шер пуç мăйракаллă шултра выльăх, 7-шер сысна, 16-шар сурăх, 50-шар кайăк-кĕшĕк тытатпăр.

Кăçал, тет малалла Коротков юлташ, выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш миллион тенке çитет. Эпир хамăр умма колхоз кĕтӳвĕнчи сăвакан ĕнесен шутне виçĕ хут çура яхăн ӳстерме задача кăларса тăратрăмăр. Пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле çавăн пекех сурăхсен, лашасен, сыснасен, кайăк-кĕшĕксен шучĕ чылай ӳсмелле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри пысăк задача вăл обществăлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстересси пулать. Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхĕ çаплах пĕчĕккĕ-ха. Кăçал тĕслĕхрен, пĕр ĕне пуçне вăтам шутпа 2.500 литр сĕт суса, пĕр сурăх пуçне 2,6 килограмм çăм касса илетпĕр. Кашни сысна аминчĕн 18-шар çура илмелле.

Çитес çул, статьяра çырнă тăрăх, колхоз пĕр ĕне пуçне 3.500-шер литр сĕт, кашни сысна аминчен 20-шер çура, кашни сурăхран 3,5-шер килограмм çăм илме палăртнă.

Выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хурас ыйту çинче чарăнса тăрса, Коротков юлташ акакан курăксен, силос культурисен, тымарçимĕçсен тухăçне çултан-çул ӳстерсе пынине палăртать. Кăçал клевер 350 гектар акнă. Гектар пуçне 120-шер центнер утă туса илнĕ. 35 гектар çинчен колхоз 25 пин центнер выльăх кăшманĕ пухса илет. 500 тонна силос хывса хăварнă.

Малалла статьяра çĕртме пуссинче çĕрулми туса илни çинчен каласа панă. Иртнĕ çул колхоз çĕрулми 60 гектар çинче лартса тунă пулсан, кăçал, çĕртме пуссипе усă курса, 250 гектар çинче лартса тунă. Малтанлăха палăртнă тăрăх колхоз 50 пин центнертан кая мар çĕрулми пухса кĕртет.

Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх вĕçленнĕ тĕле колхоз çак майпа кашни çул 400 гектар çĕрулми лартса тăвакан пулать. Çак çĕр лаптăкĕ çинчен вăл 100 пин центнер таран çĕрулми пухса кĕртет.

1954 çулта колхоз нумай çул ӳсекен курăксем 400 гектар, тымарçимĕç — 45 гектар, силос культурисем — 35 гектар акать. Çак çĕр лаптăкĕ çинчен туса илекен выльăх апачĕ обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли, унăн тухăçне ӳстермелли плана тултарма та, колхозниксен аллинче тăракан выльăхсене усрама та çителĕклĕ пулать.

Выльăх апачĕн çирĕп никĕсне туса хунипе пĕрлех, колхоз выльăх-чĕрлĕх валли лайăх çуртсем туса лартасси çине тимлĕн пăхать. Хальхи вăхăт тĕлне ĕне витисем 2, сысна вити, çĕрулми усрамалли вырăн, силос башни 2, кормокухня, шыв парса тăракан башня туса лартнă. Вĕсем пурте нумай вăхăта пыракан чул çуртсем.

Колхозăн обществăлла хуçалăхĕн тĕп отраслĕсем тĕреклĕнсе, аталанса пынипе пĕрлех, колхозниксен материальнăй пурнăçĕ лайăхланать, вĕсен культурăлла шайĕ ӳсет.

Юлашки çичĕ çул хушшинче колхозниксем ĕçкунĕ пуçне вăтам шутпа 4-шар килограмм ытла тырă, 3-шер килограмм пахча çимĕç, 5-шер килограмм выльăх апачĕ тата укçан 4 тенкĕ те 50-шар пус илсе тăнă. Юлашки çулсенче ĕçкунĕсем тăрăх çĕрулми валеçме пăрахнă, мĕншĕн тесен колхозниксем хăйсен килвырăн çĕрĕ çинче ăна ытлашшипех çителĕклĕ туса илеççĕ.

Кăçал колхозниксем ĕçкунĕ тăрăх апат-çимĕç продукчĕсем иртнĕ çулхинчен те ытларах илеççĕ. Ĕçкунĕсем тăрăх тырă, пахча çимĕç, выльăх апачĕ валеçсе панисĕр пуçне аш-какай тата усламçу валеçсе пама палăртнă.

Кашни колхозник килĕ ĕнесĕр пуçне ытти выльăхсем те нумай тытать. 435 колхозник килне мăйракаллă шултра выльăхсем 625 пуç, вăл шутран: 435 ĕне, 2,5 пине яхăн сурăх, 900 пуç ытла сысна, 5.600 ытла кайăк-кĕшĕк тивет.

— Эпир,— тет Коротков юлташ,— колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх паха йышши утă-улăм тата сĕтеклĕ апат валеçсе пама шутлатпăр. Колхозниксене хăйсен килĕнче тытакан ĕнесен пахалăхне лайăхлатма пулăшатпăр. Колхозниксем хăйсен килĕсенче тытакан ĕнесенчен суса илекен сĕт тухăçĕ колхоз обществăлла ĕнесенчен суса илекен сĕтĕн вăтам тухăçĕнчен кая мар пулмалла.

Правлени культура ыйтăвĕсене тивĕçтерме уйăрса паракан укçа-тенкĕ шучĕпе Кольцовкăра вăтам шкул çурчĕ туса лартнă, Орел ялĕнче çичĕ çул вĕренмелли шкул çурчĕ туса лартма тытăннă. Больницăна çĕнетсе пысăклатаççĕ. Унта терапевт уйрăмĕ, ача çуратмалли уйрăм, пĕчĕк ачасене сыватмалли уйрăм пулаççĕ. Амбулаторире рентген тата физиотерапи кабинечĕсем ĕçлесе тăраççĕ.

Колхозниксен килĕсене электричество тата радио кĕртнĕ. Ялта клуб, кинозал, библиотека, вуламалли зал уçнă. 15 çул хушши ĕнтĕ «Сталинец» хаçат тухса тăрать. Унăн тиражĕ 500 экземпляр.

— Колхоз пуянлăхĕн çăлкуçĕ, колхозниксен пуян та культурăллă пурнăçĕн никĕсĕ çĕр пулса тăрать,— тенĕ статьян юлашки пайĕнче.— Эпир колхоза çирĕплетсе панă кашни гектар çĕрпе пĕлсе усă курнипе ытларах материальнăй пурлăх илме тăрăшатпăр. Пирĕн задача çакăн пек — çĕр мĕн пама пултарать, малта пыракан агротехникăпа усă курса тата производствăна механизацилесе, унтан пурне те илес пулать.

Обществăлла хуçалăха тĕреклетессишĕн тата аталантарассишĕн, ял ĕçченĕсен материальнăй пурнăçне лайăхлатассишĕн, культурăлла шайне ӳстерессишĕн кĕрешес ĕçре парти организацийĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл хăйĕн ретĕнче 62 çынна пĕрлештерсе тăрать.

Парти организацийĕ колхоз правленине хуçалăхлă задачăсене татса парас ĕçри йывăрлăхсене çĕнтерме, обществăлла хуçалăхăн интересĕсене колхозниксен интересĕсемпе сыхăнтарма, артель членĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн куллен тăрăшма пулăшать. Пысăк ĕçсенче те, пĕчĕк ĕçсенче те колхозри парторганизаци çул кăтартса пыракан вăйĕ курăнса тăрать.

— Сталин ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн нумай çулсем хушшинчи опычĕ, обществăлла хуçалăха аталантарас ĕçре тунă çитĕнӳсем унăн малашлăхĕ,— тесе вĕçлет С. Е. Коротков юлташ хăйĕн статьине,— колхоз стройĕн никăм çĕнтереймен хăватлă вăйĕ çинчен, социализмла ялхуçалăхне çĕнĕрен тата çӳлĕрех пусăма çĕклеме иксĕлми резервсем пурри çинчен калаççĕ.

Ялхуҫалăх ĕҫĕсене лайăхрах механизацилессишĕн

Октябрьти Социализмла Аслă революци пуланăранпа 36 ҫул тултарнă куна пирĕн бригадăри механизаторсем пысăк ҫитĕнÿсем тунипе кĕтсе илчĕҫ. Тракторпа тумалли ҫулталăкри ĕҫсен планне МТС-ра чи малтан тата социализмла обязательствăра палăртниччен пĕр уйăх маларах тултарнă.

Механизаторсем пур ĕҫсене те планран ирттерсе пурнăҫларĕҫ, ял ĕҫченĕсемпе пĕрле ĕҫлесе, тырпулпа выльăх-чĕрлĕх тухăҫне самай ÿстерчĕҫ.

Бригада «Партизан» колхозра ĕҫлет. Механизаторсен аллинче пуян техника тăрать. Бригада 3 трактор, 3 сеялка, 3 культиватор, ҫĕре тарăн сухаламалли плуг, жнейкăсемпе косилкăсем, ҫĕрулми кăлармалли машина, силосорезка, лущильник, тракторпа ĕҫлемелли волокуша тата молотилка тытать. Ҫаксем уй-хир ĕҫĕсене анлăн механизацилеме, тырпул тухăҫне хăпартма май параҫҫĕ. Колхозра кăҫал ирхи тата кĕрхи ҫĕртме сухисене, культиваци тăвассине, силос хывассине, ҫĕрулми кăларассине пĕтĕмпех МТС механизмĕсен вăйĕпе тунă, тырă вырса авăн ҫапас ĕҫсене 80 процента ҫити механизациленĕ. Колхоз тытакан гидроэлектростанци вăйĕпе усă курнине шута илсен, ялхуҫалăх ĕҫĕсене 95 процент таран машинăсемпе тунă.

Эпир ҫуракине ир вĕҫлерĕмĕр, пĕтĕмпех ретлĕ майпа, нумай ҫĕрте хĕреслĕ тата ансăр ретлĕ майсемпе акрăмăр. Малта пыракан ҫĕнĕ меслетсемпе—хĕреслĕ тата ансăр ретлĕ майсемпе акнă сĕлĕ ытти майсемпе акниччен гектар пуҫне 3—4 центнер ытларах тухать.

Ҫĕрулмине мĕнпур лаптăкăн ҫуррине тăваткал тĕмĕн лартса хăварнăччĕ. Ҫулла ретсем хушшине ХТЗ-7 трактортан кăкарса ĕҫлекен культиваторпа икĕ хутчен ҫемҫетнĕ, ҫумкурăкĕсенчен таҫа тытнă. Калас пулать, ҫак малта пыракан меслете эпир малтанхи ҫулах, опытсем ҫук пулин те, вĕренсе алла илтĕмĕр. Ахальтен мар ĕнтĕ ҫак лаптăксем ҫинчи ҫĕрулми тухăҫĕ чылай пысăкрах пулчĕ.

Бригадăри механизаторсем кăҫал ытти ĕҫсене те чылай турĕҫ: уя тислĕк кăларчĕҫ, утă ҫулчĕҫ, хăмăл сухаларĕҫ, волокушăпа улăм купаларĕҫ, ҫĕрулми кăларчĕҫ. Ҫак ĕҫсене планпа палăртниччен 2—3 хут ытларах тунă.

Халĕ эпир колхозниксемпе пĕрле ҫитес ҫулхи вăйлă тырпулшăн, продуктивлă выльăх-чĕрлĕхшĕн хастарлă кĕрешетпĕр. Ҫак кĕрешÿре малтанхи хăшпĕр ҫитĕнÿсене тунă та ĕнтĕ. Кĕрхи тырăсене августăн 20-мĕшĕ тĕлне акса хăварнă. Мĕнпур лаптăкăн ҫуррине хĕреслĕ майпа акнă. Кĕрхи тырăсем акмалли ҫĕртме пусисене ҫу каҫиччен 5 хутчен культиваци тунă, тислĕк нумай кăларнă. Халĕ калчасем патвар ҫитĕнсе хĕле кĕрсе юлаҫҫĕ.

Ҫитес ҫуркунне ҫуртри акмалли мĕнпур лаптăка кĕрхи ҫĕртме туса хăварнă. Ҫĕртмене пĕлтĕрхинчен 5—6 сантиметр тарăнрах сухаланă. Вырăнти тата минераллă удобренисемпе лайăх ҫемҫетнĕ вырăнсенче суха касси тарăнăшне 31 сантиметра ҫитернĕ.

Килес ҫул ыраш акмалли пысăк лаптăка хура ҫĕртме туса хăварни те пирĕншĕн ҫĕнĕ ĕҫ пулса тăрать.

Эпир лайăх пĕлетпĕр: агротехникăлла мероприятисен комплексне пурнăҫламасăр вăйлă тырпул туса илме ҫук.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решенисем механизаторсен ĕҫри хастарлăхне темиҫе хут ÿстерчĕҫ. Эпир килес ҫул колхозра ҫĕрулмине пĕтĕмпех тăваткал тĕмĕн лартса, унăн тухăҫлăхне 200 центнера ҫити ÿстермелле тăвасшăн. Пахча ҫимĕҫсемпе тымарҫимĕҫсем туса илес ĕҫе те пĕлтĕрхинчен темиҫе хут ытларах механизацилеме палăртнă. Халĕ колхоза выльăх-чĕрлĕх фермисем тума йывăҫ турттарса пама хатĕрленетпĕр.

Ĕҫре ҫитĕнÿсем тума бригадăри механизаторсем машинăсене техника енчен вăхăтра тата тĕрĕс пăхса тăни те пулăшрĕ. Паллах, кăткăс машинăсемпе тухăҫлă ĕҫлеме техникăна лайăх пĕлекен кадрсем кирлĕ. Бригадăра 5 тракторист тата 4 прицепщик. П. Михайлов тракторист 1936 ҫултанпа ĕҫлесе пысăк опыт пухнă, техникăпа агротехникăна тимлесе вĕреннĕ. Вăл хăйĕн сменщикĕпе кăҫал 2.040 гектар сухаланă чухлĕ ĕҫ тунă. Хăй тухăҫлă ĕҫлет ҫеҫ мар, вăл ыттисене те лайăх ĕҫлеме вĕрентет, хăйĕн опычĕпе паллаштарать. Бригадăра ҫĕршыври тата хамăр МТС-ри малта пыракан механизаторсен опычĕпе усă курасси йăлана кĕнĕ.

Паян эпĕ бригада коллективĕ ячĕпе килес ҫул тата лайăхрах ĕҫлеме, Октябрь революцийĕ 37 ҫул тултарнине ҫулталăкри ĕҫсен планне 150 процент тултарнипе кĕтсе илме сăмах паратăп.

В. ЕГОРОВ,
трактор бригадин бригадирĕ.
Красноармейски МТС-ĕ.

Редакцие килнĕ ҫырусем

Вырăнти материалсемпе усă курмаҫҫĕ

Чурачăк районĕнчи киров хăш колхоза пырсан та колхозниксем урапа-ҫуна, ут таврашĕсем ҫителĕксĕр пирки ÿпкелешнине илтме пулать. Хальхи вăхăтра чылай колхозсенче выльăх-чĕрлĕх фермисенче апат хатĕрлекен кухньăсем, кăмакасем тăвасси хĕртнĕ кирпĕч ҫуккипе чарăнса тăрать. Нумай колхозниксем кăмакасем тума е юсама тăрсан, хĕртнĕ кирпĕч тупаймаҫҫĕ. Кирпĕч илме Канаша е Шупашкара каяс пулать. Кирпĕч хакĕнчен ытла ҫул укҫипе нумай тăкак тухать.

Районти промкомбинатăн колхозсемпе ĕҫсыннисем валли кирлĕ таварсем туса кăларассишĕн тăрăшмалла. Анчах промкомбинат ку тарана ҫитсе те кĕпе-тумтир ҫĕлес, ать-пушмак юсас, витресемпе тимĕр кăмакасем тăвас ĕҫе кăна туса пырать-ха. Вăл вырăнти материалсенчен пĕр тавар та туса кăлармасть.

Сăмахран, район территорийĕнче кирпĕч ҫапмалли тăмпа хăйăр темĕн чухлех. Начар ĕҫ пулнă пулĕччĕ-и промкомбинат колхозсем валли хĕртнĕ кирпĕчсем туса сутма тытăнсан?

Тÿрех каламалла, районти руководительсем те вырăнти промышленность ĕҫне вăйлатасси ҫинчен, ĕҫсыннисем валли кирлĕ таварсемпе материалсем туса кăларас ĕҫре вырăнти майсемпе усă курасси ҫинчен тĕплĕн шутласа пăхман-ха.

Партипе правительство ялхуҫалăхне малалла аталантарас, ĕҫсыннисен пурнăҫне лайăхлатас тĕлĕшпе питех те паха постановленисем йышăнчĕҫ. Ҫак постановленисенчен тивĕҫлĕ вывод туса, промкомбинатăн колхозсемпе ĕҫсыннисен нушисене тивĕҫтересси ҫине хытăрах ҫаврăнса пăхмалла.

П. ПАВЛОВ.

Колхозсенче пулă ĕрчетесси ҫинчен

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ колхозсенче пулă ĕрчетес ĕҫе те пур майсемпе те аталантарса пымаллине кăтартса пачĕ.

Ҫакна пурнăҫлама Комсомольски районĕнчи хăшпĕр колхозсенче лайăх майсем пур. Ку енĕпе «Искра» колхозра условисем уйрăмах лайăх. Колхоз кĕтне шывĕ хĕрринче. Сулахай енче лапам вырăн пур. Кĕтне сарăлса кайсан, ҫав вырăна ҫуркунне шыв илет. Лапам вырăнти вăйлă ҫăлкуҫĕнчен тухакан шыв та вунта юхса кĕрет.

Темиҫе гектар ҫĕр лаптăкĕ йышăнакан ҫак лапам вырăнта темиҫе ҫул хушшинче колхоз пулă ĕрчетме пуҫланăччĕ. Пулă хăвăрт ĕрчеме тытăннăччĕ. Ку ĕҫре ҫирĕп йĕрке тунă пулсан, паллах, пулă сутса колхоз пысăк тупăш илме пултарнă.

Анчах колхоз правленийĕ пулă ĕрчетес ĕҫе хакламарĕ, пулăсене ÿссе ҫитиччен тытма пуҫларĕҫ. Ҫитменнине тата кÿлĕ ăшăхланса пычĕ, мĕншĕн тесен кунта ҫуркунне юшкăн нумай ларса юлать.

«Красная звезда» колхозра та пулă ĕрчетме лайăх условисем пур. Колхоз ҫĕрĕ ҫинчи кÿлле тавраш районсем те лайăх пĕлеҫҫĕ. Ăна курма Чкаловски, Елчĕк тата ытти хăшпĕр районсенчен те килеҫҫĕ. Пĕр вăхăтра ку кÿлĕре пулă нумай пулнă. Халĕ пулă йышĕ хăвăрт чакать. Правлени пулă ĕрчетес ĕҫе тивĕҫлипе организацилеме тăрăшмасть. «Гвардеец» колхозра та кÿлĕ пур. Кÿлĕри пулăсене уйрăм ҫынсем хăйсем валли тытса пĕтереҫҫĕ, кÿлĕ колхоза тупăш памасть.

Пулă ĕрчетес ĕҫе хакламасăр тăни пулмалла мар. Ку ĕҫе колхозсенче анлăн сарса пыни кирлĕ.

Н. КВАСОВ,
«Октябрь ялавĕ» хаҫат редакторĕ.

МАГАЗИНРА

Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ магазинра яланах халăх тулли пулать. Пир-авăрпа хатĕр кĕпе-тумтир уйрăмĕнче халăх уйрăмах нумай.

Магазина виҫĕ хĕр кĕчĕҫ. Вĕсем — Шупашкарти электроаппаратура заводĕнчи работницăсем.

— Ҫĕнĕрен илсе килнĕ таварсем пур-и?—ыйтрĕ пĕри продавщицăран.

— Пур,—кăмăллăн ответлерĕ ҫамрăк продавщица Римма Шипицына.—Хăшне кăмăллатăр? Акă темиҫе тĕрлĕ пурҫăн пир илсе килнĕ.

Римма Шипицына хĕрсене нумаях пулмасть илсе килнĕ пурҫăн пирсене кăтартать. Хитре чечеклĕ пурҫăн пир тĕркисем куҫа илĕртеҫҫĕ.

Ҫав вăхăтра вĕсем патне пĕр колхозник пырса тăчĕ те, хĕрсем пекех кĕпе ҫĕлетмелли материал ыйтрĕ. Вăл Ишлей районĕнчен килнĕ колхозник Иван Васильевич Смирнов пулчĕ.

Заводри хĕрсем хыҫҫăн Смирнов хăйне валли те, ачисем валли те кĕпелĕх туянчĕ. Вун-вунпилĕк минут хушшинче темиҫе ҫын хăйсене кăмăла каякан таварсем суйласа илчĕҫ.

Юнашар прилавок умĕнче те халăх нумай. Хатĕр кĕпе-тумтир уйрăмĕнче тавар илекенсем хĕрсе калаҫаҫҫĕ.

— Кĕпи лайăх ĕнтĕ, ним каламалли те ҫук,—арҫын кĕпине тытса пăхрĕ пĕри. Вăл пир-авăр комбинатĕнче ĕҫлекен мастер помощникĕ Кузьма Петрович Толстов пулчĕ. Сорочкăна чылайччен пăхкаларĕ те, кÿреннĕ пек пулса, продавщицăна таварса пачĕ.

— Кăмăла каймасть-им?—ыйтрĕ продавщица.

— Ăҫта ҫĕленĕ-ха ăна?—тепĕр хут кĕпене тытса пăхрĕ. Толстов. — Шупашкарти ҫĕвĕ фабрикинче иккен.

— Тем ҫитменлĕхсем асăрхамарăр пулĕ те?—интересленчĕ продавщица.

— Питех кăмăла каймасть ҫав. Материалĕ лайăх, ҫĕлессе те начар мар ҫĕленĕ темелле, анчах куратăр-и, сухавине мĕнле тыттарнă. Ман шутпа, сухавине ҫыпăҫтармалли тÿмене перламутртан лартмалла пулнă. Ахалĕн пĕрре-иккĕ тăхăнсанах тÿми тутăхать те сухави юрăхсăра тухать. Тутăх лекнĕ ҫĕртен час ҫĕтĕлет. Хак парса туяннă кĕпене ҫак пĕчĕк кăлтăкшăнах улăштарма лекет. Перламутртан тусан йÿнерех те пулмалла.

— Тÿмисене те ячĕшĕн кăна лартнă пулас,—калаҫăва хутшăнчĕ тепри. — Тăхăнас умĕн вĕсене ҫĕнĕрен ҫирĕплетсе тухмалла, ахалĕн тăхăннă-тăхăнманах таталса ÿкеҫҫĕ. Хĕле хирĕҫ урăхларах кĕпесем ҫĕлесен те аван пулнă пулĕччĕ.

Продавщица илекенсен сĕнĕвĕсене ҫырса юлчĕ, Ленин ячĕпе тăракан ҫĕвĕ ҫĕлекен фабрикăна пĕлтерме пулчĕ.

Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ магазин хулара чи лайăх ĕҫлекен магазинсен шутне кĕрет. Продавщицăсем тавар илекенсене яланах ăшă кăмăлпа кĕтсе илеҫҫĕ, тавар илекенсен сĕнĕвĕсене шута илсе, ҫитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме тăрăшаҫҫĕ.

Кăҫалхи иккĕмĕш кварталта магазин тавар ҫаврăнăш планне 118,3 процент тултарнă пулсан, виҫҫĕмĕш кварталта вара тавар сутас енĕпе хулара пĕррремĕш вырăна тухнă. Тавар ҫаврăнăшĕ уйăхран уйăха ÿссе пырать.

Нумаях пулмасть кунта ĕҫлекенсем ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советла суту-илĕве аталантарса пымалли мерăсем ҫинчен» йышăннă постановление тата ССР Союзĕн Суту-илÿ министрĕ А. И. Микоян тунă доклада сÿтсе яврĕҫ. Магазинра ĕҫлекенсем ҫак постановлени пысăк хаваслăхпа йышăнчĕҫ. Пухура малашне суту-илÿ ĕҫне тĕпренех лайăхлатмалли майсене палăртрĕҫ.

1-мĕш номерлĕ магазин хула варринче. Кунта тавар туянакансен йышĕ, ытти магазинсемпе танлаштарсан, чылай нумайрах. Магазинта пĕтĕмпе 9 уйрăм. Анчах вĕсене уйăрса панă вырăнсем ытла та хĕсĕк. Пĕр уйрăмĕ теприне ĕҫлеме кансĕрлет. Ҫутă сахал, шалта питĕ тăвăр. Укҫа тÿлемелли виҫĕ касса ĕлкĕрсе пыраймаҫҫĕ. Савăт-сапа уйрăмĕнче кирлĕ таварсене яланах туянма ҫук. Сăмахран, ҫăпаласемпе алюминирен тунă савăт-сапа, электричествăпа пĕҫермелли кастрюльсемпе ытти вак-тĕвек таварсем ҫукпа пĕрех. Кондитерски уйрăмра та часчасах ассортимент чухăн. Печенисемпе ача-пăча валли ҫимĕҫсем сайра хутра кăна пулкалаҫҫĕ.

Ҫаксем ҫинчен каларĕҫ пухура. Магазинра ĕҫлекенсен хастарлăхĕ пысăк. Вĕсем, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕн постановленийĕпе хавхаланса, ҫĕнĕ ҫитĕнÿсем тума, ĕҫсыннисене куллен кирлĕ таварсем ытлăн-ҫитлĕн парса тăма пĕтĕм вăйне хураҫҫĕ.

И. ГРИГОРЬЕВ.

Тĕрĕслеме янă ҫырусем тăрăх

«Коммунизм ялавĕ» хаҫат редакцине Муркаш районĕнчи Шептак ялповĕн Оринино уйрăмĕ халăха куллен кирлĕ таварсем кÿрсе килсе сутманни ҫинчен ҫыру килнĕччĕ.

Ҫак ҫырăва тĕрĕслеме янă хыҫҫăн, ĕҫсынни депутачĕсен Муркаш район Совечĕн исполкомĕ унта кăтартнă фактсем пурте тĕрĕс пулни ҫинчен пĕлтерчĕ. Пĕр вăхăтра, чăнах та, Орининăри магазинта ҫеҫ мар, ытти хăшпĕр магазинсенче те тăвар, краҫҫын тата ытти куллен кирлĕ таварсем пулман. Хальхи вăхăтра пур магазинсенче те ĕҫсыннисене куллен кирлĕ таварсем сутассине йĕркеленĕ.

Ҫавăн пекех суту-илÿ ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене пĕтересси ҫинчен ялпо председателĕсен районти канашлăвĕнче сÿтсе явнă, Шептак ялповĕн председательне Григорьев юлташа ĕҫсыннисене куллен кирлĕ таварсене вăхăтра кÿрсе тăма хушса хăварнă.

* * *

Шупашкар районĕнчи «Коммунизм» колхоз членĕсем «Коммунизм ялавĕ» хаҫат редакцине районти финанс пайĕн инспекторĕ А. Семенов юлташ ялхуҫалăх артелĕн Уставне пăсса, никамран ыйтмасăрах, колхоз кĕлечĕсем вырнаҫнă пахча вырăнĕнче ҫĕрулми туса илни тата унăн арăмĕ Е. Столярова нихăш ҫулта та ĕҫкунĕсен минимумне тултарманни ҫинчен ҫырса пĕлтернĕччĕ. Редакци ҫырăва Шупашкар район Совечĕн исполкомне тивĕҫлĕ мерăсем йышăнма янăччĕ.

Райисполком ҫырури фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулни ҫинчен пĕлтерчĕ. Семенов юлташ ялхуҫалăх артелĕн Уставне пăсни ҫинчен исполком ларăвĕнче сÿтсе явнă. Райисполком Семенов йышăнса илнĕ пахча вырăнне колхоза тавăрса пани ҫинчен пĕлтерчĕ.

* * *

«Коммунизм ялавĕ» хаҫат редакцийĕ Красноармейски районĕнчи «Родина» колхозра сада япăх пăхни ҫинчен ҫырнă ҫырăва районти ялхуҫалăхĕпе хатĕрлев управленине тĕрĕслеме янăччĕ.

Красноармейски районĕнчи ялхуҫалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ ҫырура кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни ҫинчен пĕлтерчĕ. «Родина» колхоз правленине сада пăхса усрас ĕҫе лайăхлатма хушнă.

* * *

Калинино район центрĕнчи чайнăйри йĕркесĕрлĕхсем ҫинчен ҫырнă ҫырăва «Коммунизм ялавĕ» хаҫат редакцийĕ райсовет исполкомне тĕрĕслеме янăччĕ.

Райисполком ҫырура кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни ҫинчен пĕлтерчĕ. Хăйне шанса панă ĕҫе тивĕҫлипе туса пыманшăн Васильева официантăна вырăнтан кăларнă.

Мир вăрҫа ҫĕнтерет

Пирĕн ҫĕршыв ҫинче сутă хĕвел ялкăшать. Вăл мирлĕ пурнăҫăн хĕвелĕ. Анчах тĕнчере вăрҫăшăн ҫунакан империалистсем пуррине те эпир пĕлсе тăратпăр.

Мир! Ҫак сăмах тÿрĕ кăмăллă ҫынсемшĕн чи ҫывăх та юратнă сăмах пулса тăчĕ. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Будапештри сессийĕ чĕнсе калани, Мирĕ хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕҫлекен Совет Комитечĕн пленумĕн решенине тÿрĕ кăмăллă этемлĕх чĕререн ырласа йышăнчĕ.

Халăхсем миршĕн кĕрешес ĕҫе йышăнни хутшăнса пынă вăхăтра ырă кăмăллă ҫынсене манăн хамăн ăраскалăм ҫинчен каласа парас килет.

Эпĕ иртнĕ вăрҫăччен мирлĕ ĕҫпе — халăха ҫутта кăларас, ҫамрăк ăрăва вĕрентес ĕҫпе пурăннăччĕ. Совет влаҫĕ мана, ĕҫхресченĕн ывăлне, педагогика училищинчен, унтан институтран вĕренсе тухма май туса пачĕ. Педагогика наукисене тата тĕплĕнрех вĕренес тесе, эпĕ ССР Союзĕнчи халăхсен чĕлхипе ҫырулăхĕн Мускаври институтĕ ҫумĕнчи аспирантурăна вĕренме кĕнĕччĕ. Анчах манăн ĕмĕте гитлерла вăрă-хурахсем татрĕҫ.

Тăван ҫĕршыв умне хăрушлăх килсе тухсан, эпĕ те чăтса тăраймарăм: хампа пĕрле вĕренекен аспирантсемпе тата Мускав ҫыннисемпе пĕрле, ополчени ретне тăрса, ылханлă тăшмана хирĕҫ ҫапăҫма тухса кайрăм. Астăватăп, пирĕн дивизире рабочисемпе пĕрле профессорсем те, художниксемпе артистсем те пурччĕ.

...Сталинград. Атăл хĕрри. Фашистла захватчиксем ҫак герой-хулана пăхăнтарас тесе урса кайсах тапăнаҫҫĕ. Тăшман дивизийĕсене хирĕҫ миҫе хутчен атакăна кĕрсе тухнине эпир маннă ĕнтĕ: кăнтăрла та, ҫĕрле те кайнă. Пĕтĕм таврара вилĕм явăнать темелле, пирĕн ретсем те сайраланчĕҫ. Анчах вилĕмрен хăраса калаҫакан никам та ҫук.

Татăклă наступлени. Унта каяс умĕн пире, команлирпа иксĕмĕре (эпĕ ун чухне комиссар пулăччĕ), дивизи командирĕ генерал-майор хăйĕн патне чĕнсе илчĕ. Генерал пирĕн умма задача лартрĕ те пире ăна пурнăҫлама кайма ирĕк пачĕ. Унпа тепĕр хут тĕл пулма май килмерĕ. Юлашки атакăра тăшмансем мана йывăр суранларĕҫ.

Капитализмла ҫĕршывра пулсан, ман пек ҫынна, вырăн ҫинчен тăрайман ҫынна, вилĕмрен те хăрушăрах асап, нуша, мăшкăл кĕтсе тăмалла. Социализмла Тăван ҫĕршывра пачах урăхла: мана, йывăр аманнă ҫынна, вилĕмрен ҫăлса хăварчĕҫ, стройран тухса ÿкме памарĕҫ, ĕҫе хутшăнма май туса пачĕҫ.

Совет ҫĕршывĕне унăн халăхне вилĕм кÿрес текенсем хăйсем тĕп пулчĕҫ. Совет халăхĕ тунă ҫĕнтерÿ маншăн та ҫĕнтерÿ пулчĕ. Совет Союзĕ ертсе пыракан мирпе демократи тата социализм лагерĕ тăвакан кашни ҫĕнтерÿ—маншăн та пысăк телей.

Мир вăл—халăхсен телейĕ те лăпкă пурнăҫĕ. Вăрҫă—халăхсен вĕҫĕмсĕр куҫҫулĕпе юнĕ. Ҫуклăхпа юхăну. Миршĕн кĕрешесси—таса чĕрелле пĕтĕм этемлĕхĕн пĕрремĕш тивĕҫĕ. Ҫавăнпа та тĕнчери таврашулла ыйтусене мирлĕ майпа татса парассишĕн пыракан юхăма ҫĕршер миллион ҫынсем хутшăнаҫҫĕ те ĕнтĕ.

Гитлерла вăрă-хурахсен ҫулĕпе кайма шутлакан агрессорсен ăс-тăнĕ ытла та кĕске-ҫке! Вĕсем Сталинград ҫинчен манчĕҫ пулĕ-шим? Мирлĕ политикăна ҫирĕп тытса пыракан совет халăхĕ, хăйĕн хăватлă вăйĕ ҫине иксĕлми шанса, тĕнчери пур тĕрлĕ ыйтусене те мирлĕ майпа калаҫусем иртттернипе татса пама сĕнет. Кунпа пĕрлех совет халăхĕ, ăсран тухнă агрессорсем пирĕн ҫĕршыв ҫине тапăнма хăяс пулсан, вĕсене ҫаварлăхлама яланах хатĕр тăрать.

Радио тăрăх куллен паракан ҫĕнĕ хыпарсем пирĕн аслă Тăван ҫĕршывăн вăйĕ ҫăлкуҫ пек тапса тăни ҫинчен пĕлтереҫҫĕ. Океан леш енче вăрҫă пĕлĕчĕсем капланма хăтланаҫҫĕ, анчах вĕсем мирпе демократи тата социализм лагерĕнчи ҫĕршывсем ҫинчи мирлĕ пурнăҫ хĕвелне хуплама вăй ҫитерес ҫук. Мирлĕ пурнăҫшăн кĕрешекенсен вăйĕ халĕ вилĕм кÿрекен вăрҫă вăйĕсенчен нумай вăйлăрах, малашне вĕсем татах та вăйлăрах пулĕҫ.

Мир вăрҫа ҫĕнтерет!

Г. БАЙДЕРЯКОВ.

Ҫĕрпÿ хули.

Колхозсене пулăшаҫҫĕ

ҪĔМĔРЛЕ. Хулари предприятисен коллективĕсем районти колхозсене пысăк пулăшу параҫҫĕ. Йывăҫ япаласем тăвакан завод коллективĕ колхозсене сутма 200 парник рами туса хатĕрленĕ. Ҫулталăк вĕҫлениччен завод тата ҫавăн чухлĕ рама тăвать.

Завод коллективĕ Сталин ячĕпе тăракан тата «Ударник» колхозсене шефа илнĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоза 50 парник рами панă. Нумаях пулмасть «Ударник» колхозра заводри специалистсем пулчĕҫ. Техникăлла пай начальникĕ В. Ряузов юлташ колхозра йывăр ĕҫсене механизацилемелли майсене тĕпчесе пăхнă. Колхоз малашне пахча ҫимĕҫ ытларах акса тума, сад ÿстерме палăртнă. Завод коллективĕ колхоз валли торфпа ҫĕрĕк тăпри чÿлмекĕсем тумалли станоксем хатĕрлет. Кунсăр пуҫне «Ударник» колхоза тырпул пухса кĕртме, ялхуҫалăх продукчĕсене хатĕрлев пунктне турттарма чылай пулăшнă.

Экстракт тăвакан «Большевик» завод районти утă колхоза электричество энергийĕ парать. «Комбинат» колхозра завод парса тăракан электричество вăйĕпе хăма ҫуракан рама тата арман ĕҫлет. Кунсăр пуҫне, выльăх-чĕрлĕх фермисене шыв парас, авăн ҫапас, тырă тасатас ĕҫе механизациленĕ. Электричество вăйĕпе усă курни колхозниксен ĕҫ тухăҫлăхне тата культурине ÿстерет, ĕҫ вăйне чылай перекетлеме, ялхуҫалăх ĕҫĕсене хăвăртрах тума пулăшать.

«Большевик» завод колхозсене электричество энергийĕ тата ытларах парса тăма пултарать. Ленин ячĕпе, Калинин ячĕпе, Маленков ячĕпе тăракан, «Вперед», «Родина» колхозсем авăн ҫапнă чухне ҫеҫ электричество вăйĕпе усă курнă. Асăннă колхозсен руководителĕсем тăрăшсан, кунта выльăх-чĕрлĕх фермисенчи чылай ĕҫсене механизацилеме пулать. Завод колхозсене электричество энергийĕ йÿнĕ хакпа тата хĕлĕн-ҫăвĕн парса тăма пултарать.

«Большевик» завод коллективĕ шефа илнĕ «Победа» колхоза тырпул пухса кĕртме тата ялхуҫалăх продукчĕсем турттарма автомашинăсемпе пулăшнă. Вăл колхоза электростанци оборудованине вырнаҫтарса лартма сăмах панă. Заводра йывăҫ детальсем туса кăларакан мастерской пур. Колхоз йывăҫ парсан, завод ун валли парник рамисем туса хатĕрлеме пултарать.

П. АЛЕКСАНДРОВ.

Актив—вырăнти Советсен тĕрекĕ

Умра тăракан пысăк та ответлă задачăсене ăнăҫлăн пурнăҫласа пырасси вырăнти Советсен исполкомĕсем хăйсен нумай енлĕ ĕҫĕнче депутатсемпе активистсем ҫине таянса ĕҫлениччен, халăхăн анлă йышĕпе тачă ҫыхăнса тăниччен килет. Ҫапла туса пыма тăрăшаҫҫĕ Шупашкар районĕнчи вырăнти Советсен исполкомĕсем хăйсен кулленхи ĕҫĕсене. Район Совечĕн тата ял Совечĕсен исполкомĕсем практикăлла ĕҫе депутатсене анлăн хутшăнтараҫҫĕ, колхозсен руководителĕсемпе, активистсемпе, ялти интеллигенципе тачă ҫыхăнса ĕҫлеҫҫĕ.

Активпа тачă ҫыхăнса ĕҫлемелли форма вăл яланхи комисси пулса тăрать. Пирĕн районти Советсем ҫумĕнче тĕрлĕ енĕпе ĕҫлекен яланхи комиссисем 64. Комиссисенче 164 депутат. Вĕсемсĕр пуҫне, комиссисенче ĕҫлеме колхозсен председателĕсемпе бригадирĕсене, фермăсен заведующийĕсене, малта пыракан колхозниксене, учительсене, агрономсене, медицина работникĕсене хутшăнтарнă. Вĕсем вырăнти Советсене организацилле-массăлла ĕҫре куллен пулăшса пыраҫҫĕ.

Организацилле-массăлла ĕҫре Советсен сессийĕсене вăхăтра та лайăх хатĕрленсе иртттерни пĕлтерĕшĕ пысăк. Ҫавăнпа та райсовет исполкомĕ сессисене хатĕрленес ĕҫе депутатсене тата актива яланах йышлă хутшăнтарать.

Районта суту-илÿ ĕҫĕнче пысăк ҫитменлĕхсем пур, ҫак ĕҫе лайăхлатма хăвăртрах тивĕҫлĕ мерăсем йышăнни кирлĕ. Ҫакна май исполком район Совечĕн пĕр сессийĕнче суту-илÿ ĕҫĕ мĕнле тăни тата ăна лайăхлатма мĕнле ĕҫсем тăвасси ҫинчен ыйту лартрĕ. Сессире ҫак ыйтăва сÿтсе явма хатĕрленес ĕҫе депутатсенчен чылайăшĕ хутшăнчĕ. Вĕсем ялпосен, магазинсемпе лавккасен ĕҫĕсене тĕрĕслерĕҫ. Ҫапла, Фадеева депутат Сĕнъялти магазинра суту-илÿ мĕнле пынине тĕрĕслесе, сессире практикăлла сĕнÿсем нумай пачĕ. Сессие хатĕрленес тĕлĕшпе Ильин, Артемьева, Меркурьева депутатсем те активлă ĕҫлерĕҫ.

Сессире депутатсемпе активистсем райпотребсоюзăн тата ялпосен ĕҫĕсене тĕплĕн тишкерсе тухрĕҫ, паха та усăллă сĕнÿсем нумай пачĕҫ. Тухса каланисенчен ҫакă палăрчĕ: райпотребсоюз ҫĕнĕ строительство валли уйăрса панă укҫатенкĕпе япăх усă курнă. Магазинсемпе лавккасенче халăха куллен кирлĕ таварсенчен чылайăшĕ пулман. Хăшпĕр лавккасем ĕҫ вăхăтĕнчех хупă тăнă. Райпотребсоюз правленийĕпе ялпосен правленийĕсем суту-илÿ ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене пĕтерме вăхăтра мерăсем йышăнман.

Райсовет сессийĕ хăй йышăннă решенире райпотребсоюз правленине кăҫал тума палăртнă ҫĕнĕ ҫуртсене хăҫанччен туса пĕтермеллине, суту-илĕве лайăхлатма мĕн тумаллине кăтартса пачĕ. Кун ыйтăвĕ хыҫҫăн чайнăй валли ҫĕнĕ ҫурт лартма пуҫланă, ытти халĕ строительсем тимлĕн ĕҫлеҫҫĕ. Сесси решенине ĕҫе кĕртессишĕн депутатсемпе активистсем тăрăшса ĕҫлени районта суту-илÿ ĕҫне лайăхлатма чылай пулăшрĕ.

Анчах суту-илÿ ĕҫĕнче халĕ те ҫитменлĕхсем нумай-ха Райисполкомпа ял Совечĕсен халĕ СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Советла суту-илĕве малалла аталантарса пымалли мерăсем ҫинчен» йышăннă постановление пурнăҫласа пырас тĕлĕшпе тимлĕн ĕҫлемелле, суту-илĕве ертсе пырас ĕҫе тĕпренех лайăхлатмалла.

Район Совечĕн тепĕр сессийĕнче Толик Хураски ял Совечĕн ĕҫĕсем ҫинчен сÿтсе яврăмăр. Ҫак ыйтăва сессире пăхса тухма хатĕрленме ял Совечĕн депутачĕсемпе активисчĕсем нумай пулăшрĕҫ. Вĕсем колхозсенче хуҫалăхла-политикăлла ĕҫсем мĕнле пынине тĕплĕн тĕрĕслесе тухрĕҫ. Вĕсемпе пĕрле ку енĕпе специалистсем: агроном Горбунов юлташ, зоотехник Николаев юлташ, врач Кочеткова юлташ тăрăшса ĕҫлерĕҫ. Вĕсем ял Совечĕн ĕҫĕнчи ҫитменлĕхсене палăртса, ҫавсене хăвăртрах пĕтерме мĕнле ĕҫсем тума кирлине кăтартса пачĕҫ. Вĕсен сĕнĕвĕсене сессире пурте ырласа йышăнчĕҫ. Ку сĕнÿсем ял Советĕнчи колхозсене организаципе хуҫалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетмĕ, хуҫалăхăн кая юлнă отраслĕсене вăйлатма май параҫҫĕ. Сесси йышăннă решение колхозсен правленийĕсенче тата колхозниксен пухăвĕсенче ăнлантарса панă. Колхозсем халĕ ялхуҫалăхĕнчи кăҫалхи ĕҫсене ăнăҫлă вĕҫлесе пыраҫҫĕ.

Ĕҫсынни депутачĕсен район Совечĕпе ял Совечĕсен депутачĕсем тата совет активĕ производствăра тăрăшса ĕҫлет. Сăмахран, район Совечĕн депутачĕ Фадеева юлташ—Сĕньял шкулĕнчи чи лайăх учительницăсенчен пĕри. Район Совечĕн депутачĕ Бородов юлташ—машина-трактор станцийĕн пултаруллă ĕҫлекен комбайнерĕ. Вăл комбайнпа тырă вырмалли плана 110 процент тултарчĕ. «Память Кирова» колхозăн бригадирĕ, район Совечĕн депутачĕ Скворцова юлташ производствăра тăрăшса ĕҫлет, унăн бригади ялхуҫалăх ҫулне районта пуринчен малтан вĕҫлерĕ.

Активпа тачă ҫыхăнса ĕҫлени культура строительствинче те ҫитĕнÿсем тума май парать. Хальхи вĕренÿ ҫулĕ пуҫланнă вăхăтра пур ачасене те шкула ҫÿреме явăҫтарас ĕҫ начар пулса пыни палăрчĕ. Райисполком ялти активистсене шкул ҫулне ҫитнĕ ачасене пурне те шута илсе тухма хутшăнтарчĕ. Халĕ вара пур ачасем те шкулсенче вĕренеҫҫĕ. Хăшпĕр шкулсем ҫумĕнче интернатсем пур. Шкулсене ҫĕнĕ вĕренÿ ҫулне хатĕрлес енĕпе уйрăмах Апашри ҫичĕ ҫул вĕренмелли шкул директорĕ Федоров юлташ, Ҫатра Лапҫарти ҫичĕ ҫул вĕренмелли шкул директорĕ Иванов юлташ тăрăшса ĕҫлерĕҫ.

Кăҫал Шупашкар районĕнчи вырăнти Советсем ҫул-йĕр тумалли плана пурнăҫлас енĕпе пысăк ĕҫ турĕҫ. Ҫул-йĕр тунă вăхăтра пĕтĕм ĕҫе активистсем пуҫарса пычĕҫ. Альбеш ял Совечĕн депутачĕсем Малинов, Александров тата Ермолаев юлташсем ҫул тунă ҫĕрте хăйсем ĕҫлерĕҫ, ытти ҫынсене пример кăтартрĕҫ, тăрăшса ĕҫлеме хавхалантарчĕҫ. Ҫавна пула ку ял Советĕнчи Кадыков ячĕпе тăракан колхоз ҫулйĕр строительствин планне районта чи малтан пурнăҫларĕ.

Нумай ял Совечĕсен ĕҫĕнчи практика ҫакна кăтартса парать: ăҫта ял Совет ĕҫне актива анлă хутшăнтараҫҫĕ, унта ĕҫсем ăнăҫлă пулса пыраҫҫĕ. Тĕслĕхрен, Толик Хураски ял Советнех илер. Ку ял Совечĕ финанс планне уйăхран уйăха, кварталтан кварталта ăнăҫлă тултарса пырать. Унта финанс активĕн ĕҫне лайăх йĕркеленĕ. Активистсем халăх хушшинче ялхуҫалăх налогĕ ҫинчен йышăннă ҫĕнĕ закона ăнлантарса пачĕҫ, налог тата ытти укҫа-тенкĕ парăмĕсене тÿлеме тивĕҫлĕ ҫынсенĕ хăҫан налог укҫи тата заем укҫи тÿлесе татмалли ҫинчен вăхăтра астутарса тăчĕҫ. Ял Совечĕн бюджетпа финанс енĕпе ĕҫлекен яланхи комиссийĕн председателĕ Павлов депутат халăхран укҫа-тенкĕ пухас енĕпе тăрăшса ĕҫлет. Ку ĕҫе депутат И. Андреев юлташ тата Т. Ивановпа В. Николаев юлташсем хастарлă хутшăнаҫҫĕ. Ял Совет депутачĕ Н. Максимов юлташ пуҫарнипе кăҫал ял Совечĕн территорийĕнче икĕ пĕве пĕвеленĕ.

Райисполкомпа ял Совечĕсен руководителĕсен совет активĕн йышне ÿстерсе пыма яланах тăрăшас пулать. Кулленхи практикăлла ĕҫре активăн пĕлĕвне ÿстерсе пымалла. Актива вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе куллен-кун ҫине тăрса ĕҫлемелле. Совет активĕн канашлăвĕсене часчас иртттерсе, унта вырăнти Советсем умĕнче тăракан ĕҫсем ҫинчен, ĕҫсыннисен социализмла ăмăртăвне анлă сармалли ҫинчен каласа кăтартмалла, ĕҫри паха опытна паллаштармалла.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ совет халăхĕ умне ҫывăх вăхăтрах пурнăҫламалли пысăк задачăсем кăларса тăратрĕҫ. Ҫав задачăсене пурнăҫлама райисполкомпа ял Совечĕсен колхоз ĕҫченĕсене тата ялхуҫалăх работникĕсене организацилесе пырас пулать. Ҫав ĕҫре те актив ҫине таянмалла. Специалистсене вырăнти Советсен ĕҫне ытларах хутшăнтармалла. Шупашкар райисполкомĕпе МТС дирекцийĕ ҫак кунсенче 31 специалист суйласа илсе колхозсене ячĕҫ. Ҫав вăйпа колхозсене ертсе пырас ĕҫе лайăхлатма, ялхуҫалăхĕн пур отраслĕсене те ытларах аталантарма усă курас пулать.

А. СЕМЕНОВ,
Шупашкар райисполкомĕн председателĕ.

Минераллă удобрени нумай кÿрсе килеҫҫĕ

ИШЛЕЙ. Районти колхозсем валли Ишлей разъездне минераллă удобрени вагонĕ-вагонĕпе килсе тăрать. Юлашки вăхăтра Карл Маркс ячĕпе тăракан, «За коммунизм» колхозсен ячĕпе 50-шар тонна фосфорит ҫăнăхĕ, 50-шар тонна кали тăварĕ килнĕ. Калинин ячĕпе, «Коминтерн» колхоз ĕҫченĕсем 50-шар тонна фосфорит ҫăнăхĕ, «Урожай» колхоз членĕсем 50 тонна кали фосфорĕ, «Правда» колхоз 50 тонна пĕрчĕлетнĕ суперфосфат пуштарĕҫ.

В. ЧЕРНОВ.

Электростанци лартаҫҫĕ

ЕТĔРНЕ. «1-мĕш Мая» колхоз членĕсем кăҫал радиоузел лартрĕҫ. Кашни колхозник килĕнчех халĕ радио калаҫать. Колхозра электростанци тума пуҫланă. Двигатель туяннă. Конституци Кунĕ тĕлне электростанцие туса пĕтерсе, колхозниксен ҫурчĕсене Ильич лампочкисем кĕртессишĕн тăрăшса ĕҫлеҫҫĕ.

И. ПЕТРОВ.

ВАЙĂ ЮРРИ

Музыки А. Токаревăн. Сăмахĕсем А. Алгапа В. Давыдовăн.

Хăвăрт. Хаваслăн.



1. Колхоз хĕрсем, чипер хĕрсем,
Мĕнле качча саватăр-ши?

Каччă тени сатур пултăр,
Ĕçе тăрсан ĕçчен пултăр!
Вăйя тухсан маттур пултăр,
Куçран пăхсан йăл култăр.

2. Ай, каччисем, маттур яшсем,
Мĕнле хĕре саватăр-ши?

Хĕр тени вăл чипер пултăр,
Ĕçчен алли ăста пултăр,
Юрри шăпчăк сасси пултăр,
Курас килсен чун çунтăр.

3. Колхоз хĕрсем, чипер хĕрсем,
Мĕнле качча тĕл пултăр-ши?

Сатур качча тĕл пултăмăр,
Ăна курса калаçрăмăр,
Унпа пĕрле ĕçлерĕмĕр,
Вăл комбайнер — пĕлтĕмĕр.

4. Ай, каччисем, маттур яшсем,
Мĕнле хĕре тĕл пултăр-ши?

Чипер хĕре тĕл пултăмăр,
Ĕçре харсăр — сăнарăмăр,
Эпир унпа пуплерĕмĕр,
Вăл агроном — терĕмĕр.

Канаш хулинчен килнĕ хыпарсем

★ **Ача ашшĕ-амăшĕсен лекторийĕ.** 8-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсене валли ятарласа лектори организациленĕ. Унта ачасене килте воспитани памалли майсемпе паллашаççĕ. Пурĕ 16 лекци вуланă.

Çак кунсенче «Ачасене килте уроксене хатĕрлеме пулăшасси» темăпа лекци пулчĕ.

★ **Диетстоловăй уçрĕç.** Вагонсем юсакан заводра ятарласах диетстоловăй уçрĕç. Столовăйĕнче апат пахалăхне лайăхлатма заводри профсоюз комитечĕ 5 пин тенкĕ уйăрса панă.

★ **Студентсен конкурсĕ.** Учительсем вĕрентсе хатĕрлекен институтра студентсен научнăй ĕçĕсен конкурсне ирттерме палăртнă.

Конкурса СССР историйĕ, чăваш халăх историйĕ, философи тата ытти ыйтусем тăрăх научнăй ĕçсем тăратаççĕ. Конкурс 1954 çулхи апрелĕн 15-мĕшĕччен пулать.

★ **Çĕнĕ чайнăй.** Чăвашторгăн Канашри уйрăмĕ икĕ хутлă чул çурт тума тытăннă. Унта чайнăй пулать.

★ **40 пин кĕнеке.** Ялхуçалăх механизаторĕсене вĕрентсе хатĕрлекен училище библиотеки çулсеренех пуянланса пырать. Çак кунсенче пин тенкĕлĕх çĕнĕ кĕнекесем туяннă. Халĕ библиотекăра 40 пин кĕнеке ытла.

Г. ИСАЕВ.

Грузсене хăвăрт пушатаççĕ

Йĕпреç станци иртнĕ уйăхра грузсем турттармалли плана октябрĕн 25-мĕшĕнче пурнăçларĕ. Станци халăха кирлĕ таварсем турттарма вагонсем татти-сыпписĕр уйăрса парать.

Дмитриев, Куршев, Защелкин дежурнăйсем, Рузанов, Гордеев весовщиксем ĕçленĕ сменăсенче вагонсем нормăран ытлашши лармаççĕ. Барбасовăпа Дергунов стрелочниксем те лайăх ĕçлеççĕ. Çак кунсенче çĕрле икĕ вагона поездран вĕçертсе илсе, чылай груз пушатмалла пулнă. Девятова весовщицăпа Балякин грузчик çав грузсене вагонсене поездран вĕçертсе илмесĕрех пушатнă. Çапла вара пăравус маневр тумалли срока чылай чакарнă.

И. ТИХОНОВ.

Çĕнĕ кĕпер тунă

ШАМАРШĂ. Виçпуçт Шăмăршăра çак кунсенче çĕнĕ кĕпер туса пĕтерчĕç. Кĕпер тăршшĕ 20 метр. Ĕçе çул-йĕр бригадин бригадирĕ М. Кулькин юлташ ертсе пычĕ. Ватă колхозниксем А. Алюковпа В. Ильбеков юлташсем кĕпер тунă çĕрте уйрăмах хытă тăрăшса ĕçлерĕç. Вĕсем кулленхи ĕç нормине 120—133 процент тултарса пычĕç.

М. КАРИМОВ.

Китайри предприятисенче «Совет Союзĕнче малта пыракан ĕç меслечĕсемпе усă кураççĕ

ШАНХАЙ, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем Китайра Совет Союзĕнчи производство опычĕпе анлăн усă курни çинчен пĕлтереççĕ. «Лаодунбао» хаçат çапла çырать: çĕршыва ирĕке кăларнă хыççăн Шанхайри чугун çул управленийĕнчи рабочисемпе служащисем Совет Союзĕнчи транспорт мĕнле ĕçленине тĕплĕн вĕренме тытăннă. Совет Союзĕнчи ĕç меслечĕсемпе усă курни транспорт ĕçне чылай лайăхлатма тата грузсем турттарассине чылай ӳстерме май панă. Тавар тиекен вагонсен çаврăнăшĕ çак çулта, 1949 çулхипе танлаштарсан, 42 процент ӳснĕ.

«Лаодунбао» хаçат çавăн пекех Шанхайри йывăр промышленность предприятийĕсенче Совет Союзĕнчи малта пыракан опыта тăтăшах вĕренни çинчен пĕлтерет. Государствăн «Синьху» ятлă металлурги завочĕ иртнĕ çулта заданисене тултарса пырайман. Кăçал унта Совет Союзĕнчи пек график системипе ĕçлеме тытăннă. Завод ун хыççăн продукци туса кăлармалли çулталăкри плана виçĕ уйăх маларах тултарнă.

Хальхи вăхăтра, тесе çырать хаçат, Шанхайри йывăр промышленность завочĕсенчен нумайăшĕ продукцие Совет Союзĕнчи тĕслĕхсем тăрăх туса кăлараççĕ. Ку вăл продукцин пахалăхне лайăхлатма тата ĕçсене йӳнетме май парать. Çапла, Шанхайри электропроводсем тăвакан заводра Совет Союзĕнчи тĕслĕхсем тăрăх ултă йышши продукци туса кăларма тытăннă. Ку вăл çулталăкра материалсем кăна 30 пин юанлĕх яхăн перекетлесе хăварма май парать.

КОРЕЙĂРА СОВЕТ СОЮЗĔПЕ КУЛЬТУРĂЛЛĂ ÇЫХĂНУ ТЫТАКАН ОБЩЕСТВО ТУСА ХУНĂРАНПА САКĂР ÇУЛ ÇИТНĔ

ПХЕНЬЯН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Корейăра Совет Союзĕпе культурăллă çыхăну тытакан общество туса хунăранпа паян сакăр çул тултарнă.

Çавна май «Минчжу Чосон» хаçат Обществăн Центральнăй правленийĕн председателĕ Ли Ги Ен çырнă статьяна пичетлесе кăларнă.

Статьяра çапла каланă: сакăр çул каярах Корейăра Совет Союзĕпе культурăллă çыхăну тытакан общество организациленĕ. Ун чухне общество 3 пин çынна кăна пĕрлештерсе тăнă. Халĕ обществăн членĕнче 2.100 пин çын шутланать.

Массăлла-обществăлла организаци пулса тăрса, общество, Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи ĕççыннисене Совет çыннисен пурнăçĕпе, вĕсен ĕçри çитĕнĕвĕсемпе тата культура енĕпе тунă ӳсĕмсемпе паллаштарса, пысăк ĕç туса иртерет. Кăçал кăна Общество издательстви совет писателĕсен кĕнекисене пурĕ 115 пин экземпляр пичетлесе кăларнă.

ПОЛЬШĂРИ РАБОЧИСЕН ПĔРЛЕШНĔ ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ ПĔЛТЕРНИ

ВАРШАВА, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри пичет агентстви çапла пĕлтерет:

Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕ çакăн пек пĕлтернине пичетлесе кăларнă:

Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн IX-мĕш пленумĕн решенийĕ тăрăх, Центральнăй Комитетăн Политбюровĕ тĕпрен илсен пленум ырланă тезиссене пичетлесе кăларнă. Вăл тезиссем çакăн пек:

1. «Ултă çуллăх плана тултарас ĕçри çитĕнӳсем тата ултă çуллăх планăн юлашки икĕ çулĕн (1954—1955 çулсем) экономикăлла тĕп задачисем».

2. «1954—1955 çулсенче ялхуçалăхне аталантармалли задачăсем тата ялхуçалăх производствине вăйлатас тĕлĕшпе йышăнма кирлĕ мерăсем çинчен».

Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн IX-мĕш пленумĕ çак тезиссене парти организацийĕсенче сӳтсе явма хушнă. Тезиссене критикăпа самокритикăна анлăн сарса пынă условисенче сӳтсе явмалла.

Парти членĕсем тезиссем пирки хăйсен шухăш-кăмăлĕсене палăртма тата тӳрлетӳсем пама, вĕсене сӳлте тăракан парти организацийĕсене тата парти хаçачĕсене ярса пама пултараççĕ.

Парти хаçачĕсен парти членĕсене съезд умĕнхи дискуссие анлăн хутшăнма майсем туса памалла.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ чĕнсе калани

ВЕНА, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнам халăхĕн хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн Франци захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн нацилле кунĕ çывхарнă май, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн секретариачĕ пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене чĕнсе калавине пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ пухнă Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕнче 79 çĕршыври 88.600 пин çын представителĕсем чаплăн çапла пĕлтернĕ: 1953 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕ—Вьетнам халăхĕн захватчиксене хирĕç тăмалли нацилле кунĕ—Вьетнам халăхне активлăн пулăшмалли пĕтĕм тĕнчери кун, Вьетнамри колониллĕ вăрçа чарса лартассишĕн кĕрешмелли кун пулать.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ чĕнсе калавинче çакна кăтартса панă: питĕ пысăк çухатусем пулнине пăхмасăр, халăхсен хăйсен кун-çулне хăйсем татса пама право пуррине пăхмасăр, Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн Уставне хирĕç пырса, Франци империалисчĕсем пур майсемпе те хăйсем пуç пулса тăпине сыхласа хăварма тăрăшаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем Вьетнамăн нацин никама пăхăнманлăхĕшĕн тата ирĕклĕ пурăнассишĕн, хăйсен пурнăç шайне ӳстерессишĕн çĕршывăн пуянлăхĕсемпе хăйсем шутланă пек усă курассишĕн пыракан тĕреслĕхлĕ шухăш-ĕмĕчĕсене путарса лартасшăн.

Ку вăрçă халĕ те чарăнмасть, мĕншĕн тесен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви, пĕр енчен, Америка монополийĕсен усламĕсене сыхласа хăварасшăн (вăл монополисем Индо-Китайри натуральнăй каучукăн 89 процентне хăйсен аллинче тытса тăраççĕ), тепĕр енчен, халăхсем Корейăри вăрçа чарса ларттарнă хыççăн, США правительстви пĕтĕм тĕнчери империалистсемпе пĕрле Вьетнамра Азири вăрçăн вучахне сыхласа хăварасшăн тата Вьетнам территорийĕнчен ирĕклĕ те мире юратакан Китай Халăх Республикине хирĕç агресси пуçламалли база тăвасшăн.

Чĕнсе калавинче çапла çырнă: Франци рабочи класĕпе демократиллĕ вăйĕсем Вьетнам халăхне хирĕç туса пыракан çак «ирсĕр вăрçа» татăклăн хирĕç тăраççĕ. Вьетнам халăхĕн паттăр кĕрешĕвĕ тата Францири ĕççыннисем хăйсене паттăррăн тытни çавăн патне илсе çитерчĕç: Францири общественность уççăнах Вьетнамри вăрçă ĕçĕсене чарса лартассишĕн, вăрçă чарса лартас тата мир тăвас шутпа калаçусем пуçлассишĕн тăрать.

Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен представителĕсем, хăйсен Вьетнамри тусĕсемпе пĕр кăмăллă пулса, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕнче Вьетнамри вăрçа ним тăхтаса тăмасăр чарса лартма требовани лартрĕç. Вĕсем Вьетнам халăхне активлăн пулăшмалли Пĕтĕм тĕнчери куна ирттересси çинчен решени йышăнчĕç.

Мире сыхласа хăварас çĕрте питĕ кирлĕ çак тĕллеве пурнăçлас тесе, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ нацилле центрсене, пĕтĕм тĕнчери пĕрлешӳсене, мĕнпур профсоюзсемпе мĕнпур ĕççыннисене, политика тĕлĕшпе мĕнле шухăш-кăмăллă пулнине тата мĕнле профсоюзра тăнине пăхмасăр, 1953 çулхи декабрĕн 19-мĕшне Вьетнамри колониллĕ вăрçа чарса лартассишĕн тата унтан экспедици корпусне илсе тухассишĕн, Вьетнам халăхĕн ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăх правине хисеплессишĕн пĕрлешсе кĕрешмелли аслă кун туса хурас тесе мĕнпур кирлĕ мерăсем йышăнма чĕнет.

Çакна май тăвакан мĕнпур конкретлă ĕçсене мухтама тивĕçлĕ. Çак куна хатĕрленнĕ тапхăрта, Франци колонизаторĕсен преступленийĕсене тăрă шыв çине кăларма тата вăрçа чарма требовани лартас тесе, Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕ выставкăсем, митингсем организацилеме, пухусемпе конференцисем ирттерме чĕнет.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш конгресĕ, тенĕ юлашкинчен чĕнсе калавинче, çакна çирĕплетсе пачĕ: Вьетнамри тăвансем ирĕклĕхпе никама пăхăнманлăхшăн кĕрешеççĕ. Ку ĕç мĕнпур ĕççыннисен, мĕнпур халăхсен пĕрлехи ĕçĕ пулса тăрать.

Мосаддыка суд туни

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 8-мĕшĕнче Султанабадра (Тегеран хули çывăхĕнчи поселок) Мосаддыкпа Иран çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнă Рияхи ĕçĕ тăрăх çар сучĕн ларăвĕсем пуçланни çинчен пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ дивизионнăй генерал Могбель Мосаддыка унăн ĕçне пăхса тухакан судăн прависем тĕлĕшпе вăл мĕн шухăшлани çинчен каласа пама сĕннĕ.

Мосаддык çапла каланă: мĕнпур законсене вăл «Чрезвычайнăй полномочисем çинчен йышăннă законпа» килĕштерсе кăларнă. Çав чрезвычайнăй полномочисене ăна меджлис панă пулнă. Çавăнпа та, çак законсене меджлис улăштариччен, ку законсем хăйсен вăйне çухатмаççĕ. Вĕсен шутне çар тĕлĕшпе кăларнă законсем те кĕреççĕ. Çак законсенчен пĕри вăл, тенĕ Мосаддык, çар сучĕсене салатса ярасси çинчен йышăннă закон пулать. Вăл закона меджлиссăр пуçне никам та улăштарма пултараймасть. Çавăнпа та çак судăн унăн ĕçне пăхса тухма право çук.

Мосаддык çавăн пекех çапла каланă: Азмуде генерал çак судра айăплакан пулма пултараймасть, мĕншĕн тесен вăл (Мосаддык) наци оборонин министрĕ, Азмуде—ăна пăхăнса тăракан çын пулнă. (Иранри законсем тăрăх, пăхăнса тăнă çынсем хăйсен начальникĕн ĕçĕ тăрăх айăплакан е суд членĕ пулма пултараймаççĕ.

Малалла Мосаддык çапла каланă: Иран историйĕнче шах премьер-министра вырăнтан кăларни тата меджлис пур чухнех çĕнĕ премьер-министр уйăрса лартни пулман. Çавăнпа та вăл, Мосаддык, законлă премьер-министр пулса тăрать. Меджлис та, тенĕ Мосаддык, ăна чрезвычайнăй полномочисем пани çинчен йышăннă закона улăштарнă хыççăн кăна премьер вырăнĕнчен кăларма пултарнă.

Çар сучĕн ноябрĕн 9-мĕшĕнчи ларăвĕнче Мосаддык хăйĕн сăмахне малалла каланă. Ют çĕршыв çыннисем, тенĕ вăл, пире тĕп тăвасшăн пулчĕç. Çак тĕллевпе вĕсем Хăрушсăрлăх Советне тата Пĕтĕм тĕнчери суда чĕнсе каларĕç. Анчах вĕсен нимĕн те тухмарĕ. Çакăн хыççăн вĕсем Иран çине куç хыврĕç, урăх меслетпе—меджлисри оппозицилле депутатсем урлă ĕçлеме пуçларĕç. Хăйсен планĕсене меджлис урлă пурнăçлайманнине кура, вĕсем эсфандăн 9-мĕшĕнчи (февралĕн 28-мĕшĕ. Ун чухне Мосаддык çурчĕ çине тапăннă.—**Ред.**) ĕçсене хатĕрлерĕç. Кун хыççăн вĕсем меджлис депутачĕсем—«Наци фрончĕн» членĕсем хушшинче хирĕçӳсем кăларма хăтланчĕç. Анчах кунта вĕсене референдум (халăх шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлни) чăрмантарчĕ. Вĕсен пĕр çул-йĕр кăна тăрса юлнă: Насыри полковник еврĕлĕ переворот тăвакан çын тупмалла пулнă.

Юлашкинчен Мосаддык тепĕр хут çапла каланă: судăн унăн ĕçне пăхса тухма право çук. Вăл (Мосаддык) халиччене Иранăн законлă премьер-министрĕ пулса тăрать.

ТУРЦИРЕ КĂНТĂР КОРЕЙĂНА ÇĔНĔРЕН САЛТАКСЕМ ЯМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

СТАМБУЛ, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Хюрриет» хаçат корреспонденчĕ Измиртан пĕлтернĕ тăрăх, унта Кăнтăр Корейăна çĕнĕ çар ушкăнĕ яма хатĕрленеççĕ. Çарта 4,5 пин çын пулмалла.

Турци çарĕн генеральнăй штабĕн приказĕ тăрăх, Кăнтăр Корейăна ямалли салтаксем, сержантсемпе офицерсем ятарласа хатĕрленĕ программа тăрăх хăйсен часĕсенче çар ĕçне вĕренмелле. Ун хыççăн вĕсене Сеферихисар хулинчи лагере пухаççĕ, унтан вара вĕсене 1954 çулхи май уйăхĕнче Корейăна яраççĕ.

ЦЕЙЛОН ПРАВИТЕЛЬСТВИ АНГЛИН ГЕНЕРАЛ-ГУБЕРНАТОРНЕ ПАНĂ НОТА

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Коломборан пĕлтернĕ тăрăх, Цейлон правительстви текех Англи ялавне çĕклеме кирлĕ марри çинчен тата Англин наци гимнне юрлама чарăнасси çинчен октябрĕн 29-мĕшĕнче решени йышăннă. Правительство генерал-губернатор патне нота янă. Вăл нотăра Англи губернаторĕн кунта текех пурăнма кирлĕ марри çинчен каланă.

Хĕвеланăçĕнчи виçĕ держава пуçлăхĕсен канашлăвĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет:

Шурă Çурт (США президенчĕ пурăнакан çурт) çапла пĕлтернĕ: декабрĕн 4-мĕшĕпе 8-мĕшĕ хушшинче Бермуд утравĕсем çинче президент Эйзенхауэр, Британи премьер-министрĕ Черчилль тата Франци премьер-министрĕ Ланьель тĕл пулаççĕ. Çавăн пекех çакăн çинчен пĕлтереççĕ: государство секретарĕ Джон Фостер Даллес президент Эйзенхауэрпа пĕрле, Британин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден тата Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо Великобританипе Францин премьер-министрĕсемпе пĕрле пыраççĕ.

США ХĂЙĔН АГРЕССИЛЛĔ ТĔЛЛЕВĔСЕНЕ ПУРНĂÇЛАС ĔÇРЕ ПАКИСТАНПА УСĂ КУРАСШĂН

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри хаçатсем Пакистанран Америкăн çар плацдармĕ тума май пурри çинчен сӳтсе яваççĕ.

Нумаях пулмасть «Нью-Йорк Таймс» хаçат çак ыйту тăрăх ятарласа статья пичетлесе кăларнă. «Юнайтед Стейтс ньюс энд Уорлд рипорт» журнал та, Карачипе Вашингтонран илнĕ хыпарсемпе усă курса, статья пичетленĕ. Статьяра Пакистан стратеги тĕлĕшпе мĕнле вырăн йышăнса тăнине паллă тунă. «Пĕрлешӳллĕ Штатсем,—тесе çырать статья авторĕ,—Инди позицийĕ вăйсăрлатнă районăн центрĕнче вăйлă тус пуррине палăртнă. Пакистанра 80 миллион мусульман пурăнать. Хĕçпăшал уйăрса пама ыйтса, Пакистан хăйĕн аслă руководителĕсене Вашингтона ярать.

Çар ĕçне планлас тĕлĕшпе ĕçлекен американецсем европеецсем хĕçпăшалланма килĕшменнипе, çавăн пекех Инди «нейтралитечĕпе» хăнăхнă. Пакистан тытса пыракан çул-йĕр вĕсемшĕн кĕлĕ туни çине ответ пани пекех туйăнать. Пакистан ыйтнине тимлĕ пăхса тухаççĕ».

«Пакистанăн кучухнехи аэродромĕсенчен чылайăшĕ, — тенĕ малалла статьяра,—Совет Союзĕн чиккисем çывăхĕнче. Вăл аэродромсемпе стратегиллĕ бомбардировщиксен базисем вырăнне усă курма пултараççĕ. Пакистанăн аслă представителĕсем Америкăна пыра-пыра кайнă май, США Пакистанпа килĕшӳ тăвассипе ытларах та ытларах интересленет.

ШПИОНСЕН УШКĂННЕ АЙĂПЛАНĂ

БЕРЛИН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). «Трибюне» хаçат çапла пĕлтерет: Одер çинчи Франкфуртри округри судра шпионсен ушкăнĕн ĕçне пăхса тухнă. Шпионсем ют çĕршывсенчи тата Хĕвеланăç Германири агентура центрĕсем хушнă тăрăх Демократиллĕ Германи Республикинче шпионла ĕçсем туса пурăннă. Агентура центрĕсене Гитлер генералĕ пулнă Гелен ертсе пырать.

Ушкăн пуçлăхне — Мартин Янсана ĕмĕрлĕхех тĕрмене хупмалла тунă. Айăпланакан Артур Гофмана—15 çуллăха, Вилли Шрелера—8 çуллăха тата Элизабет Шапера—2,5 çуллăха тĕрмене хупма приговор йышăннă.

ПĔЛТЕРНИ

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче, 18 сехет те 30 минутра, КПСС хула комитечĕн библиотекинче диалектикăлла тата историлле материализма харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Диалектикăлла тата историлле материализм — Коммунистсен партийĕн мировоззренийĕ, коммунизмăн теорилле никĕсĕ».

Лектор—Г. Г. Германов юлташ.

* * *

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче, 18 сехет те 30 минутра, КПСС хула комитечĕн библиотека суртĕнче парти историне вĕренекенсем валли «Парти историйĕн кĕске курсĕн» VIII-мĕш сыпăкĕ тăрăх лекци пулать.

Лектор—З. И. Федорова юлташ.

* * *

Ноябрĕн 13-мĕшĕнче, 18 сехет те 30 минутра, учительсен суртĕнче политикăлла экономие харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем валли лекци пулать. Лекци теми: «Политикăлла экономи предмечĕ».

Лектор—П. Л. Лебедев юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хаçат-журнал çырăнса илĕр!

Шупашкарта пичетленсе тухакан çак хаçатсемпе журналсене 1954 çулта илсе тăма пур граждансем те çырăнса илме пултараççĕ:

„Коммунизм ялавĕ“, „Советская Чувашия“, „Молодой коммунист“, „Çамрăк коммунист“, „Агитатор блокнотĕ“ (вырăсла тата чăвашла), **„Ялав“** журнал, **„Тăван Атăл“** альманах.

Уйрăм çынсем «Союзпичет» уйрăмĕсенче тата почтăсенче çырăнса илме пултараççĕ. Çавăн пекех письмоносецсем граждансен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем фабрикăсемпе заводсенче, учреждениссенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышăнаççĕ.

Предприятисен, организацисен, шкулсен, культпросвет учрежденисен, колхозсемпе МТС-сен служăри усă курма тата пĕрле вулама вырăнсенче усă курма хаçатсемпе журналсем «Союзпичетĕн» районсемпе хуласенчи уйрăмĕсенче çырăнса илмелле.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 13-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Çемье чысĕ».

Часах!—чăвашла спектакль «Юратнă хĕр»; вырăсла спектакль «Не называя фамилий».

Спектакль 19 сехет те 30 минутра пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—ноябрĕн 13-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм «Мой маленький друг».

Сеанссем пуçланаççĕ: 14 сехет те 15 минутра, 16 с. 15 м., 18 с. 15 м. тата 20 с. 15 м.

Шупашкарти тата республикăри экрансем çинче

„ВРАГИ“

(А. М. Горький пьеси)

ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм кăтартма пуçлаççĕ.

Спектакле Ленинградри М. Горький ячĕпе тăракан государство драма театрĕ лартнă.

Спектакль режиссерĕ — Н. Рашевская.
Фильм режиссерĕ — Т. Родионова.
Рольсене вылянă артистсем:
В. Софронов, Е. Грановская, Н. Корн, В. Кибардина, Н. Ольхина, И. Ефремов, С. Пономаренко, А. Никритина, А. Соколов, А. Лариков, В. Иллич, В. Чайников т. ыт. те.
Ленин орденлĕ «Ленфильм» киностудийĕ 1953 çулта ӳкернĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 09635 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2581. Тираж 20.000 экз.